23-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 МАРТ 22 ВЫРСАРНИКУН 68 (6093) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Колхозсен машинисемпе ӗҫ хатӗрӗсем ҫуракине хатӗр пулмалла

[illegible]

...шинисемпе инвентарӗсене юсама ку тарана ҫитсе те тытӑнман. Районра 944 плугран 206 плуга ҫеҫ юсаса хатӗрленӗ, ыттисем патне халӗ алӑ ҫитмен-ха. Ытти машинӑсем тӗлӗшпе те ӗҫ ҫавӑн пекех. 100 сеялкӑран 40 сеялкине ҫеҫ, 288 сӳререн 130 сӳрене ҫеҫ юсаса ҫитернӗ. Хӑмӑтсем, вӗренсем, тилхепесем, пӗкӗсем тата ытти ӗҫ хатӗрӗсем тӗлӗшпе, паллах, ҫитменлӗхсем татах та нумайрах. Районри «Хастар», «Красная Поляна», «Заря» тата ытти колхозсен председателӗсем ялхуҫалӑх машинисене юсассишӗн кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫураки ҫывхарса килет пулин те, вӗсем ремонт ӗҫне тытӑнман-ха.

Машинӑсемпе инвентарьсене хатӗрлес тӗлӗшпе Красноармейски, Сӗнтӗр, ...

[illegible]

...ракипе ҫыхӑнса тӑракан пур ӗҫсем те халӗ питӗ кирлӗ, паха ӗҫ пулса тӑрассӗ.

Ялхуҫалӑх машинисене, ут таврашӗсене юсаса хатӗрлесси — ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшри пысӑк задачӑсенчен пӗри пулса тӑрать. Вӑрлӑхсем хатӗрленипе, удобренисем пухнипе, лашасене лайӑх апат ҫине тӑратнипе, тракторсене юсанипе пӗрлех, колхозсен ялхуҫалӑх машинисемпе ӗҫ хатӗрӗсене юсас ӗҫе те тимлӗн туса пырас пулать. Ҫакӑ вара эпир ҫуракине пур енӗпе те хатӗрленсе пынине кӑтартакан тӗслӗх пулса тӑрать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартӑн 20-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Мартӑн 20-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем фронтӑн хӑшпӗр участокӗсенче, нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ ҫапӑҫса, наступлени туса пынӑ, нимӗҫсене пысӑк сиен кӳнӗ.

Мартӑн 19-мӗшӗнче противникӑн 37 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 14 самолет пӗтнӗ.

Мартӑн 20-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗҫсен 6 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Мартӑн 19-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 8 танкне, 53 орудине, зенитнӑй пулеметсен 12 точкине, 68 миномечне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 170 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 20 лавне, горючи тултарнӑ 5 автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ тата сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунҫул ҫинчи 16 вагона ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине 2 батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче кӗрешекен пирӗн чаҫсенчен пӗри противника халӑх пурӑнакан 3 пунктран хӗссе кӑларнӑ. Ҫапӑҫура тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫакнашкал трофейӑсем тытса илнӗ: 2 оруди, 11 пулемет, 12 автомат, 10.000 патрон, винтовкӑсем, минӑсем, ручной гранатӑсем тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсем. Тепӗр участокра Кроник юлташ командир пулса ертсе пыракан часть С. ялӗ патӗнчи ҫапӑҫура 520 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн 6 истребитель тӑшманӑн 25 самолечӗпе тӗл пулнӑ. Совет летчикӗсем тӑшмана хирӗҫ пӗр хӑрамасӑр ҫапӑҫӑва ывтӑннӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫу 18 минута хушши пынӑ. Летчик майор Букалов юлташ нимӗҫсен икӗ самолетне персе укернӗ, лейтенант Рыков юлташ пӗр самолет персе антарнӑ. Пирӗн истребительсем 6-шӗ те хӑйсен аэродромне ӑнӑҫлӑн таврӑннӑ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн разведка вӑрма ӑта нимӗҫсен 512-мӗш полкӗн 3-мӗш батальонӗнчи 45 салтакран тӑракан ушкӑнне асӑрханӑ. Ҫав салтаксем пурте, нимӗн хирӗҫ тӑмасӑрах, пирӗн разведчиксене пропусксем тата Сталин юлташӑн 55-мӗш номерлӗ приказӗ пичетленнӗ листовкӑсене, хӑйсен винтовкисемпе боеприпасӗсене парса, тыткӑна парӑннӑ. Тыткӑна парӑннисем хӑйсем тыткӑна лекес тесе ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче юриех хӑйсен чаҫӗнчен уйрӑлса юлни ҫинчен каласа панӑ.

* * *

Е. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура наводчик Виноградов юлташ хӑйӗн орудийӗнчен тӗл персе нимӗҫсен пысӑк калибрлӑ миномечне, танксене хирӗҫ печелли икӗ орудине пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн наблюдательнӑй пунктне аркатса тӑкнӑ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Саперсен ротинчи сержант Кулишев юлташ 5 кун хушшинче тӑшман хурса хӑварнӑ 500 минӑна тупса сиенсӗрлетнӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗн оккупациленӗ территорийӗнче противникӑн тылӗнче И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ ӑнӑҫлӑн кӗрешет. Хӑйсен боевой ӗҫӗсем вӑхӑтӗнче партизансем нимӗҫсен 627 салтакне, 22 офицерне, вӑл шутра пӗр полковнике, вӗлернӗ. Кунсӑр пуҫне партизансен отрячӗ боеприпассен 3 складне сирпӗнтерсе янӑ, тӗрлӗрен грузсем тиенӗ 70 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ тата пӑшалсемпе пулеметсенчен персе нимӗҫсен пӗр самолетне персе антарнӑ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсен унтер-офицерӗ Эрхард Беемe тата икӗ салтак пирӗн енне куҫнӑ. Пирӗн енне тарса килнӗ унтер-офицер ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн батальона Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне Францирен илсе килнӗ салтаксенчен пухса йӗркеленӗ. Мана 8-мӗш ротӑна ячӗҫ. Эпӗ унта пынӑ чухне ротӑра мӗнпурӗ те 50 ҫын кӑначчӗ. Февралӗн 27-мӗшӗнчен пуҫласа мартӑн 7-мӗшне ҫитиччен пирӗн ротӑра 25 ҫын вилчӗ тата аманчӗ. Мартӑн 7-мӗшӗнче эпӗ Совет Союзӗнче пурӑнакан тыткӑна лекнӗ нимӗҫсен конференцийӗ чӗнсе калани пичетленнӗ листовкӑна тупса вуларӑм. Шухӑшласа пӑхнӑ хыҫҫӑн эпӗ тыткӑна парӑнма шут тытрӑм. Кӑшт май килсенех вара эпӗ тыткӑна парӑнтӑм та».

* * *

Нимӗҫсен вилнӗ салтакӗсемпе офицерӗсем ҫумӗнче тупнӑ ҫырусемпе дневниксенче, пуринче те тенӗ пекех, вӑхӑтлӑха оккупациленӗ хуласемпе ялсенче гитлеровецсем халӑха ҫаратнисем тата тискеррӗн асаплантарнисем ҫинчен хӑйсем ҫырса пынисем пур. Акӑ нимӗҫсен 62-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 190-мӗш полкӗнчи салтак Роберт Вагнер хӑйӗн арӑмӗ патне ҫапла ҫырнӑ: «Ӗнер эпир ҫӗрулми тупрӑмӑр. Халӗ ӗнтӗ ҫимелли кӑштах пур. Ҫӗрулмипе тӗрлӗ ҫимелли татах мӗн те пулин тупсассӑн аван пулнӑ пулӗччӗ. Анчах та ялта халь сысна мар, ӗне хӳри те тупаймастӑн. Пирӗн салтаксем мӗн пуррине тӗппипех ҫисе пӗтерчӗҫ ӗнтӗ».

* * *

Сталино облаҫӗнчи Знаменка тата Черкасская ялӗсенчен тӑкса кайнӑ чухне гитлеровецсем 750 ҫуртран 675 ҫурта ҫунтарса янӑ. Ҫав ялсенчи ҫынсенчен нумайӗшне вӗсем вагонсем ӑшне хӑваласа кӗртнӗ те сирпӗнтерсе яма хатӗрленнӗ пулнӑ, анчах та ҫавна тума гитлеровецсем ӗлкӗреймен. Тарнӑ чухне вӗсем, вагонсем ҫине пулемтсенчен персе, нумай колхозниксене вӗлернӗ тата амантнӑ.

* * *

Бакури Н-ски заводри стахановецсем Велошко, Измайлов тата Донецко хӗҫпӑшал туса кӑларас ӗҫре чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. 15 кун хушшинче вӗсем ӗлӗк 45 кун хушшинче туса кӑларнӑ чухлӗ хӗҫпӑшал туса кӑларнӑ. Бригада пӗрремӗш квартал планне ытлашшипех ирттерсе тултарнӑ.

Мартӑн 21-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Мартӑн 21-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусем те пулман.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн стрелковӑй часть, вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, противник оборонин ҫирӗплетнӗ пунктне йышӑнса илнӗ тата 10 оруди, пысӑк калибрлӑ пӗр пулемет, 4 станковӑй пулемет, 200 снаряд, 500 мина, 100 ручной граната, 5.000 патрон тата ытти ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ. Нимӗҫсен вилнисемпе аманнисем нумай пулнӑ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем противникӑн виҫӗ хаяр контратакине сирсе пӑрахнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсем 100 ҫын ытла вилсе юлнӑ тата икӗ ҫӗмрӗк танк пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Пирӗн пӗр часть (Калинин фрончӗ) пӗр кун хушши ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан виҫӗ пункта нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑ. Ҫапӑҫура тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 250 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ҫак кунсенче нимӗҫ самолечӗсен ушкӑнӗ К. пунктӗ ҫине вӗҫсе пырса тапӑнма хӑтланнӑ. Тӑшман самолечӗсене пирӗн истребительсем атакӑланӑ та вӗсене каялла хӑваласа янӑ. Кӗҫӗн лейтенант Пичугин паттӑр ӗҫ тунӑ, вӑл хӑйӗн самолечӗпе пырса ҫапса нимӗҫсен «Мессершмитт-110» йышши истребительне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн экипажӗ вилсе пӗтнӗ. Самолет ӑшӗнче паха документсем тупнӑ. Ҫав ҫапӑҫура лейтенант Бондин нимӗҫсен «Ю-88» йышши самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Тараненко капитанӑн подразделенийӗнчи танкистсем паттӑррӑн кӗрешеҫҫӗ. Берешнов, Васин тата Василенко юлташсем ертсе пыракан танксен экипажӗсем пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫура нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ытла, танксене хирӗҫ печелли 5 орудие, 4 пулемета, 3 миномета пӗтерсе тӑкнӑ тата 2 ДЗОТ-а ҫӗмӗрнӗ. Капитан Тараненко аманнӑ пулнӑ. Анчах вӑл операцие ҫапӑҫу пӗтиччен ертсе пынӑ.

* * *

Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ, Ленинград облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене пысӑк ҫухатусем кӳрет. Хӑйсем ҫапӑҫнӑ вӑхӑт хушшинче партизансем нимӗҫсен 7 самолетне, 22 танкне, 106 автомашинине, 40 мотоциклне тата горючи тултарнӑ 12 цистернине пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансем противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 900 ҫынна яхӑн, вӑл шутрах 3 полковнике, вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Германи ҫарӗнчи Югослави полкӗнчен пирӗн енне куҫса каҫнӑ салтак Бранко Маркович ҫапла кӑтартса панӑ: «1942 ҫулти январӗн юлашки кунӗсенче мана ҫара илчӗҫ те Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне ячӗҫ. Эшелонра 500 ҫын пулнӑччӗ. Эпир ӑҫта тата мӗн тума кайнине офицерсем пирӗнтен пытаратчӗҫ, анчах салтаксем ӑна ӑнланатчӗҫ. Ҫул ҫинче эшелонран 100 ҫынна яхӑн тарчӗ. Пирӗн ротӑран кӑна 50 ҫын тарчӗ».

* * *

Нимӗҫсен 20-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 92-мӗш дивизионран тыткӑна парӑннӑ салтак Иозеф Руль ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ пӗрмаях тылри ҫарта Смоленскра пурӑнтӑм, унта ремонтнӑй мастерскойра ӗҫлерӗм. Юсанӑ пӑшала илсе хамӑрӑн часть вырнаҫса тӑракан яла пырсан, эпӗ вырӑссем наступлени тунине курса ӗнентӗм. Эпӗ блиндажа пытанса лартӑм, вырӑссем курӑнса кайсан вара алӑ ҫӗклесе тыткӑна парӑнтӑм. Нимӗҫ салтакӗсене ӗнтӗ вӑрҫӑ йӑлӑхтарса ҫитерчӗ».

* * *

Аяларахра нимӗҫсен фашистла захватчикӗсен тискер ӗҫӗсем ҫинчен калакан акта пичетлетпӗр:

«АКТ.

Эпир, Харьков облаҫӗнчи Шуровка ялӗнче пурӑнакансем, ҫак акта нимӗҫсем пирӗн ялта тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫыртӑмӑр. Нимӗҫ салтакӗсем хресченсене ним юлмичченех ҫаратса пӗтерчӗҫ, вӗсем пур япаласене те, вӑл шутрах минтер пичӗсене те, илсе кайрӗҫ. Ялта пӗр чӑх та, пӗр хур та, пӗр сысна ҫури те юлмарӗ. Хӑйсем чакнӑ чухне гитлеровецсем колхозниксен 157 ҫуртне ҫунтарса ячӗҫ тата 11 хресчене персе вӗлерчӗҫ, вӗсем хушшинче ҫаксем пулнӑ: Прасковья Григорьевна Николаенко — 52 ҫулта, Галина Щебеня — 10 ҫулта, Катерина Щебеня — 5 ҫулта, Анна Астафьевна Бондаренко — 50 ҫулта тата ыттисем те. Акт ҫине алӑ пуснӑ: **Ф. Г. Николаенко, Т. И. Слонь, И. А. Роленко, Е. И. Рубченко** тата **М. А. Кекало**».

Калинин юлташӑн сӑмахне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн

СОВЕТСКОЕ. «Комсомолецсем ялта — пысӑк вӑй, ҫак вӑя организацилесен, комсомолӑн колхозри организацийӗ хӑйпе пӗрле ҫамрӑксене кӑна мар, ҫитӗннӗ колхозниксене те ертсе кайма пултарсан, вӑл ҫуракине ирттерес ӗҫре, паллах, ҫитӗнӳ тума пултарать», — тенӗ М. И. Калинин юлташ Мускав облаҫӗнчи ялти комсомол организаци секретарӗсен канашлӑвӗнче.

М. И. Калинин юлташ каланӑ сӑмаха асра тытса, районри чылай колхозри комсомолецсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫе тивӗҫлипе организацилерӗҫ. Комсомолӑн Ҫухрари «Коминтерн» колхоз ҫумӗнчи организацийӗнчи комсомолецсемпе туллимар вӑтам шкулти комсомолецсем пӗрле пухӑнса 2 кун хушшинче 14 центнер урпа, 15 центнер хӑмӑк, 13 центнер хура тулӑ, 16 центнер пӑрҫа сортланӑ. Ялти комсомолецсем пуҫарнипе ҫак юлашки 3—4 кун хушшинче Ҫухра ялсоветне кӗрекен «Машина», «Клевер», «Коминтерн» колхозсенче уя 1550 лав тислӗк тӑкнӑ, 1,5 тонна кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 5 тонна кӗл пухнӑ. Ку ӗҫе комсомол организацийӗн секретарӗ Васильева юлташ хӑй ертсе пычӗ. Халӗ комсомолецсем 1942 ҫулти ялхуҫалӑх ҫулне кӑтартуллӑ ирттерес тӗлӗшпе колхозпа колхоз, бригадӑпа бригада, звенопа звено пӗр-пӗрин хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн договорне тунӑ ҫӗрте пулӑшаҫҫӗ. Договор ҫине алӑ пусаччен пӗр-пӗрин ӗҫне тӗрӗслеҫҫӗ. Комсомолецсем «Коминтерн» колхозӑн лаша витинче таса марринe, плугсем уйра ларнине асӑрханӑ. Халь ку ҫитменлӗхсене пӗтернӗ.

Кун пек примерсем районра сахал мар. Комсомолӑн Асламасри организацийӗн секретарӗ Гаврилов юлташ пуҫарнипе 340 центнер тӗрлӗ тӗшшӗ сортланӑ, уя 700 лав тислӗк кӑларнӑ, кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ 4 тонна ытла пухнӑ.

С. ИЛЬИН.

Заем укҫине пухас ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫлер

17 ялсовечӗ пухса ҫитернӗ

СЕНТЕР. Виҫҫӗмӗш Пятилеткӑн (4-мӗш ҫулхи кӑларӑм) заемне сарас тата унӑн укҫине пухас тӗлӗшпе районра уйрӑмах Кашмаш, Атапай, Юнга, Кӑпас ялсовечӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Вӗсем заема колхозниксемпе ялти служащисем хушшинче пысӑк ӑнӑҫлӑхпа сарса, укҫине иртнӗ ҫулти июль—август уйӑхӗсенчех пухса ҫитерчӗҫ. Кунти финагентсем Яриков, Фролов, Орлов юлташсем заем укҫине пысӑк хастарлӑхпа пухрӗҫ. Пушкӑрт ялсоветӗнчи финагент Никитин юлташ заема 32.280 тенкӗлӗх сарса, укҫине тепӗр 3—4 уйӑхран пӗтӗмпех пухса пачӗ.

Паянхи куна районӗпе пурӗ 17 ялсовечӗ Виҫҫӗмӗш Пятилетка (4-мӗш ҫулхи кӑларӑм) заемӗн укҫине пухас ӗҫе вӗҫленӗ.

Ҫав вӑхӑтрах районра заем укҫине пухас ӗҫре юлса пыракан ялсовечӗсем те пур. Ильинка, Шашкар, Урпаш ялсовечӗсен председателӗсем Скворцов, Морозов тата Столяров юлташсем заем кампанийне вӗҫлес ӗҫе ытти ӗҫсем хушшинче манса хӑвараҫҫӗ.

ПАКУШКИНА.

Малта пыракан ялсовет

ҪӖМӖРЛЕ. (**«Чӑваш Коммуни» корр.**) Вӑрманти Колхозсен ялсовечӗ (председателӗ М. Леонтьева юлташ) иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ финанс планне тултарас тӗлӗшпе районра малта пырать. Ялсовет уйӑхран уйӑха, кварталран квартала хӑйне панӑ плана срокчен тултарса ӗҫлет. 1941 ҫулти плана та вӑл пур кӑтартусем тӑрӑх та срокчен пурнӑҫланӑ. Ҫавна май вӑл райсоветӑн куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Кунсӑр пуҫне тата ялсовет исполкомӗн председательне Леонтьева юлташа райсовет исполкомӗ 200 тенкӗ укҫа парса премиленӗ.

Ялсовет депутачӗсем кӑҫал татах та лайӑхрах результатсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Вӑл ҫакӑнта аван курӑнать: Вӑрманти Колхозсен ялсовечӗ кӑҫалхи ҫулӑн 1-мӗш кварталти финанс планне мартӑн 11-мӗш тӗлне 119,6 процент тултарнӑ. Виҫҫӗмӗш Пятилетка (4-мӗш ҫулхи кӑларӑм) заемӗн укҫине тахҫанах парса татнӑ. Халӗ вӗсем укҫа-тенкӗ пухмалли ҫурҫулти плана майӑн 1-мӗш тӗлне тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Чакаҫ ялсовечӗ юлса пырать

КАНАШ. (**Хамӑр корр.**). Укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе малта пыракан Мӑкӑр, Шаккӑл, Янкӑлчӑ, Яманкасси тата Кивӗ Шелттем ялсовечӗсем Виҫҫӗмӗш Пятилетка (4-мӗш ҫулхи кӑларӑм) заемӗн укҫине пухас ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах ку тӗлӗшпе Чакаҫ ялсовечӗ питӗ кая юлса пырать. Унӑн пӗрремӗш кварталта заем укҫине 1500 тенкӗ пухмалла пулнӑ пулсан, вӑл пӗр пус та пухман. Сиккасси ялсовечӗ пирки те ҫавнах каламалла.

Пулӑ тытмалли Конвенцие 1942 ҫул валли тӑсасси ҫинчен Совет Союзӗпе Япони хушшинче тунӑ протокола алӑ пуснӑ май

Ҫак ҫулти мартӑн 20-мӗшӗнче Куйбышев хулинче Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ **А. Я. Вышинский** юлташ, пӗр енчен, тата Японин ССР Союзӗнчи посолӗ **г. Татекава**, тепӗр енчен, 1928 ҫулта тунӑ пулӑ тытмалли Конвенцие 1942 ҫул валли тӑсасси ҫинчен ҫырнӑ протокола алӑ пуснӑ тата ҫак ыйту пирки пӗр-пӗрине нотӑсем панӑ.

1928 ҫулта тунӑ пулӑ тытмалли Конвенцин срокӗ 1936 ҫулти май уйӑхӗнчех тухнӑ. Ҫавӑнтан вара, пулӑ тытмалли ҫӗнӗ конвенци тумалли пула, 1928 ҫулти Конвенцие, Совет Союзӗпе Япони правительствисем пӗр-пӗринпе килӗшсе, пӗрер ҫуллӑха тӑсса пынӑ. Ҫавӑн пек, 1928 ҫулта тунӑ пулӑ тытмалли конвенцие 1936 ҫул вӗҫне ҫитиччен тӑснӑ, унтан 1937, 1938, 1939, 1940 тата 1941 ҫулсенче ҫулсерен тӑсса пынӑ.

1928 ҫулти пулӑ тытмалли Конвенцие 1942 ҫул валли тӑсасси ҫинчен Куйбышев хулинче калаҫусем пулса иртнӗ май, СССР правительствипе Япони правительстви ҫакӑн пек ыйтусемпе килӗшӳ тунӑ:

1. Японин пулӑ промышленникӗсен пулӑ тытмалли 19 участокран пилӗкӗшӗнче (вӗсен аренда срокӗсем 1941 ҫулта тухнӑ) торгисене хутшӑнмалла марринe Япони правительстви килӗшнӗ.

2. 1941 ҫулти килӗшӳ тӑрӑх Японин пулӑ промышленникӗсенчен арендӑллӑ тӳлев тата паушалированнӑй налогсемпе сборсен шучӗпе тухакан мӗнпур тӳлевсен 20 процентлӑ надбавкӑсене илмелле тунӑ. Японин правительстви ҫав надбавкӑсене тӳлеме килӗшӳ панӑ.

3. Пулӑ тытмалли участоксене арендӑра тытмалли расчет условийӗсем улшӑннӑ май, Япони правительстви тӳлевсене СССР Госбанкӗ ыйтнӑ тӑрӑх, ылттӑнпа е СССР Госбанкӗ суйласа илнӗ тӑрӑх, ютҫӗршыв валютипе тӳлесе татма килӗшӳ панӑ. Ҫӳлте асӑннӑ ылттӑна Владивостока памалла.

4. Ҫавӑн пекех Япони правительстви, Японин пулӑ промышленникӗсене, вӗсем аренда тӳлевне ылттӑн хаклӗн тӳленӗ чухне, ылттӑна турттарас тӗлӗшпе тухакан расходсене витме 4 процентлӑ суммӑна Совет правительствине тӳлеме килӗшӳ панӑ.

Апат-ҫимӗҫсем тума ҫӗнӗ ресурссем

Наукӑсен Академийӗ нумаях пулмасть Тутар республикинчи вӑрмансемпе хирсенче хӑйсем тӗлленӗх ӳссе питех те нумай ҫӗрте тӗл пулакан ӳсентӑрансем ҫинчен пысӑк ыйту пӑхса тухрӗ. Колесников профессор хурӑн шывӗнчен шерпетсем тума ҫӗнӗ рецепт ҫӗнчӗ. Вӑл тата ҫавӑн пекех хурӑн шывӗ питех те пысӑк усӑ пама пултарнине тӗпчесе пӗлнӗ. Бексер профессор вӗрене шывӗнчен сахӑр тума ҫӗнӗ меслот шутласа кӑларнӑ. Ҫак ученӑйсен ӗҫӗсемпе усӑ курса, республикӑри чылай предприятисем ҫӗнӗ апат-ҫимӗҫсем хатӗрлеме тытӑнаҫҫӗ. Уйрӑмӑн каласан, ҫак ҫултах вӗрене шывӗнчен сахӑр тӑвас ӗҫе организацилеҫҫӗ. (ТАСС).

Хурҫӑ унка ӑшӗнче

ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, мартӑн 20-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Нимӗҫсен пирӗн чаҫсем хупӑрласа илсе майӗпен пӗтерсе пыракан 16-мӗш армийӗ юлашки кунсенче хӑйӗн питех те кирлӗ позицисене чылай ҫухатнӑ. Ҫак кунсенче нимӗҫсен пысӑк ҫухатусем тӳсме тивни ҫинчен ҫакнашкал документсем те витӗрех кӑтартса параҫҫӗ. Нимӗҫсен 503-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 6-мӗш ротӑн командирӗ хӑй пӑхӑнса тӑракан аслисем патне ҫакнашкал донесени ҫырса янӑ:

«6-мӗш ротӑра ӗҫсем мӗнле пыни ҫинчен пӗлтеретӗп. Ротӑн ҫакӑн пек состав тӑрса юлчӗ: офицерсем—1 ҫын, унтер-офицерсем—0, салтаксем—9 ҫын. Ротӑн пурнӑҫӗ питӗ япӑх. Ҫынсем пурто халран кайрӗҫ, мӗншӗн тесен февралӗн 23-мӗшӗнчен пуҫласа вара ҫывӑрман. Питӗ хытӑ тӑм илтерсе янисем—5 ҫын, ҫӑмӑлрах тӑм илтернисем—2 ҫын. Кунсӑр пуҫне тата ҫакна ыйтма ирӗк парсамӑр: подразделение улӑштарма май ҫук-ши, мӗншӗн тесен манӑн пӗр унтер-офицер та ҫук, ротӑра пӗр старши ефрейтор кӑна, вӑл командир пулса ертсе пыма пултараймасть. Кунсӑр пуҫне тата пулеметчик та манӑн пӗрре ҫеҫ».

Ҫав донесенипе пӗрлех пирӗн чаҫсем тата тепӗр документ тытса илнӗ. Ку документран пирӗн чаҫсем хупӑрласа илнӗ нимӗҫсен 16-мӗш армийӗнче апат-ҫимӗҫ тӗлӗшпе ӗҫсем ҫавтери йывӑрланса ҫитни тата вӑл кунран кун япӑхлансах пыни уҫҫӑн курӑнать. Нимӗҫсен хупӑрласа илнӗ дивизийӗсенчен пӗринче продовольстви тӗлӗшпе ӗҫлекен начальник хӑйӗн донесенийӗнче ҫапла пӗлтерет: «Подразделенисем продовольствие илсе, хӑйсем патӗнчи виҫесем ҫинче виҫсех валеҫеҫҫӗ. Продовольстви парса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделсем пире валли тин пуснӑ аш-какай памаҫҫӗ. Паян эпӗ ветеринартан лаша ашӗ илтӗм».

Нимӗҫсем выҫӑ кашкӑрсем евӗрлех ялсем тӑрӑх мӗн те пулин ҫимелли тупас тесе ухтарса ҫӳреҫҫӗ. Ҫав донесенирех тата ҫав шалкалосенчен пӗри апат-ҫимӗҫ тупасси ӑнӑҫлӑн пулманни ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ: «Ӗнер эпӗ ялтан тупса килнӗ пилӗк центнер ыраша манӑн продснабжени офицерне памаллаччӗ. Нумай вӑхӑт хушши калаҫнӑ хыҫҫӑн ҫав ыраша хамӑр ялтах хӑварасси пирки килӗшӳ илтӗм, мӗншӗн тесен ӑна эпӗ ӗнерех каптенармуссене валеҫсе панӑччӗ».

Ҫав донесенирех тата тепӗр тӗлӗнтермелле пӗлтерӳ пур: «Францирен пуҫтарса илсе килнӗ галетсене, унччен валеҫсе пӗтернӗскерсене, валеҫес тӗлӗшпе эпӗ нимӗн тума та пултараймарӑм, мӗншӗн тесен халӗ продснабженире галетсем ҫук», — тенӗ донесенире.

Юлашки вӑхӑтра нимӗҫсен ҫавӑрса илнӗ войскисем тӑнӑ вырӑна шала кӗрсе каякан пирӗн автоматчиксен пысӑках мар отрячӗсемпе разведчиксен групписем противника пысӑк сиен кӳреҫҫӗ.

Трошин юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд ҫак кунсенче ҫавтери хӑюллӑ рейд туса ирттернӗ. Нимӗҫсен 16-мӗш армийӗ хӑйӗн оборона пунктӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне ҫухатать. Унӑн тавра ункӑ хӗсӗннӗҫемӗн хӗсӗнсе пырать.

И. ДЕНИСОВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Тăшманăн контратакисене сирсе пăрахнă

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн фронтăн участокĕсенчен пĕринче Н-ски стрелковăй часть малалла куçса пырать, тăшманăн хирĕç тăмалли вырăнĕсене çĕмĕрсе тăта-тăта илет. Тăшманăн контратакисене ăнăçлăн сире-сире пăрахса, пирĕн боецсем тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе унăн техникине пысăк çухатусем кÿреççĕ.

— Нимĕçсем танковăй атака тума хатĕрленеççĕ, — тесе пĕлтернĕ пирĕн разведка. Старши сержанта Сиголетова задача панă — вăл хăйĕн танкисене хирĕç пемелли тупăсене ял хĕрне кăларса лартмалла та, тăшманăн танкĕсем атакăна тухсан, вĕсене тÿррĕн персе çĕмĕрсе тăкмалла.

Сиголетовăн боевой расчечĕ огневой позици йышăнать те, пĕтĕмпех хатĕрленсе çитсе, тăшман енчен килмелле пыракан çула пăхать те витĕр асăрхаса тăрать. Вăхăт çур сехет иртет. Вăрманта хайхи çулпа фашистсен танкĕ тухать. Малтан вăл хуллен пырать, унтан пĕтĕм хăвăртлăхĕпе малалла куçтарма тытăнать. Танк çывхарса çитерехпе Сиголетов ун çине икĕ хутчен перет те çĕмĕрет, экипажне йăлтах вĕлерсе тăкать.

Çав вăхăтра пĕлĕтсем хыçĕнчен нимĕç бомбардировщикĕсен звени кĕрлесе тухать, çавăнтах вăрмантан тухакан çул çинче 7 танк курăнса каять. Сиголетовăн тупăпине сывлăшран асăрхасран маскировка тумаң пулнă. Тупа çапса хăварас тесе, Сиголетовăн боецĕсем тупă çине хăпарса выртаççĕ те, ăна хăйсен шурă халачĕсемпе хупласа илеççĕ. Тăшманăн самолечĕсем курăнми пулсанах, тупă каллех пеме тытăнать. Тĕл пенипе малта пыракан танк çавăнтах çĕмĕрĕлсе каять. Ыттисем каялла çавăрăнса каллех вăрманалла тараççĕ.

Гитлеровецсем яла виççĕмĕш хут атакăлаççĕ. Марсиев командир пулса ертсе пыракан подразделенин боецĕсем ку хутра тăшманăнне 5 танк стройран кăлараççĕ. Çак ĕçре уйрăмăнах Попов сержант чапа тухнă. Вăл, хăйне вĕлерессинчен хăраса тăмасăр, тÿрем уçă вырăнпа хырăм çинче малалла шуса пынă та тĕл пенĕ гранатăпа пĕр танкăн гусеницисене татнă.

Пирĕн пехотинецсемпе пĕрле кавалеристсем питех те ăнăçлăн пĕр-пĕринпе килĕшсе кĕрешеççĕ, пĕрне-пĕри тăшмана çĕмĕрме пулăшаççĕ. Кавалеристсем хăлоллăн та чăрсăррăн тăшман оборонин ăшне тапăнса кĕрсе каяççĕ те стратеги тĕлĕшпе питех те кирлĕ объектсене арката-арката пăрахаççĕ, фашистсен тылĕнче паника кăлараççĕ. Çапла пуринчен ытла çĕрле, çын çывăрнă хушăра, çил-тăвăл пек вĕçтерсе пырса тапăнса, вĕсем нимĕçсене пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Иртнĕ çĕр кавалеристсем фронт линийĕнчен таçта шалтах ларакан ял çине сасартăк çитсе тапăннă. Фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 70 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, темиçе тĕлте чугунçула пăснă тата çыхăну линине тата-тата тухнă.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Малта коммунистсемпе комсомолецсем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). Противник туса пыракан вĕçĕ-хĕррисĕр контратакăсене пирĕн чăсçсем ăнăçлăн сире-сире пăрахаççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе çав контратакăсем хаяррăн курăнаççĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, малалла пĕр чарăнусăр наступлени туса пыма боецсемпе командирсен пысăк çирĕплĕх кирлĕ.

Çакăн пек çирĕплĕхĕн манми тĕслĕхĕсене коммунистсемпе комсомолецсем кăтартаççĕ; ăçта çавтери йывăр çапăçу, вĕсем çавăнта чи хăрушă вăхăтсенче вилĕмрен шикленмесĕр кĕрепĕре каяççĕ. Акă паян та фронтăн тĕрлĕ участокĕсенчен большевиксен паттăрлăхĕпе вĕсем хăйсене шеллемесĕр çапăçни çинчен калакан хыпарсем килсе тăраççĕ. Пирĕн чăсçем нимĕçсене пĕр ялтан халĕ анчах сирпĕнтерсе кăларса янă пулнă. Нимĕçсем çав яла каялла тытса илесшĕн тăрмашнă. Тăшманăн пехоти артиллери вăйлăн персе тăнин хÿттипе куçса пынă. Власовпа Миронов коммунистсем: «Вилер, анчах каялла пĕр утăм та чакар мар!» тесе кăшкăрса, боецсене хăйсем хыççăн малалла ертсе кайнă. Коммунистсен хăюлăхĕпе хавхаланнă боецсем противникăн тапăнăвне паттăррăн тытса чарнă, контратакăна ăнăçлăн сирсе пăрахнă тата нимĕçсене пысăк сиен кÿнĕ.

Колычев лейтенанта çапăçу умĕн анчах партие илнĕ. Пухура вăл хăй çине хунă шанчăка пурнăçа кĕртме сăмах панă, çавăнтах вăл хăйĕн подразделенине атакăна илсе кайнă. Çапăçу хирĕнче вăл 5 хутчен аманнă пулнă. Вăл, юнланса пĕтнĕскер, юлашки вăйне пухса, противник çирĕппленсе ларнă яла иличченех боецсене ертсе кайнă.

Коммунистсем Сапцов, Васильчук, Савченко, Агеев юлташсем тăван çĕршывшăн пыракан çапăçусенче хăйсене палăртрĕç те ĕнтĕ. Боецсене хăйсем еннелле сăмахпа та, ĕçпе те çавăракан çирĕплĕхлĕ çынсем вĕсем. Юлашки кунсенче Н-ски часть хăюлăхпа паттăрлăх тĕслĕхĕсене кăтартнă боецсемпе командирсене 50 çынна партие илчĕ.

Гвардеецсем тăшмана вирлĕ çапаççĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. (ТАСС спецкорĕ). 7-мĕш Гвардейски дивизири боецсем Совет Информаци Бюровĕ Берлинри радион черетлĕ элекĕ çинчен çырса пĕлтернине вуласа тухрĕç. Берлинри радио вĕсен дивизине «пĕтĕмпех çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă» тесе сÿпĕлтетет.

Фашистла йытă-çыравçăсем çапла сÿпĕлтетни гвардеецсене чăтма çук кулăтарчĕ.

— Ну, суяççĕ те иккен геббельссем, — теççĕ 7-мĕш Гвардейски дивизири боецсем. — Эпир вилнĕ, пĕтнĕ имĕш, çапах хăйсене хĕртетпĕр хамăр. Апла пулсан, пирĕн вĕсене татах та хытăрах çапас пулать-ха!

7-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизин боецĕсем тăшмана хытă çапаççĕ. Юлашки кунсенче вĕсем хăйсен чаплă боевой ĕçĕсен хисепне татах та ÿстерчĕç.

Гвардеецсен-разведчиксен лейтенант Цакурин ертсе пыракан групни нимĕçсен тылне кĕрсе кайнă. Пĕр совхоз çывăхĕнче разведчиксем засада тăваççĕ. Çĕрле совхоз патне нимĕç салтакĕсен пĕр роти çывхарать — унта нимĕçсем пурĕ 150 яхăн пулнă. Унччен те пулмасть засадăран гранатăсемпе пульăсем вăркăнма та тытăнаççĕ. Нимĕçсем чăтма çук хăраса ÿксе çухалса каяççĕ. Офицерсем епле килчĕ çапла салтакĕсене пухса контратака тума пăхаççĕ. Çапăçу пуçланса каять. Çав çапăçура пирĕн гвардеецсен пĕчĕк групписем 93 фашиста пĕтерсе тăкать. Ытти нимĕçсем, чĕрĕ юлнисем, пăрахса тараççĕ. Гвардеецсем нимĕçсен документĕсене тата хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ.

Боец Сафуков вăрçăра суранланнă пулнă, анчах вăл ун çинчен никама та пĕлтермен, çаплах тăшмана хирĕç çапăçнă. Кайран кун çинчен комиссар пĕлсен, комиссар унтан мĕншĕн-ха эсĕ ху суранланни çинчен пĕлтермерĕн тесе ыйтнă та, Сафуков боец ăна çапла ответ панă:

— Юлташ комиссар! Эпĕ фашистсене хирĕç пĕр тумлам юн юлмиччен çапăçатăп! — тенĕ.

Çавăн пек вĕсем 7-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизин паттăрĕсем.

И. ДЕНИСОВ.

Нимĕçсен пĕр приказĕ пирки

Нумаях пулмасть пирĕн дивизисенчен пĕри нимĕçсен 23-мĕш армейски корпусĕн çакнашкал интереслă приказне тытса илнĕ:

«Секретно. 23-мĕш армейски корпусăн командованийĕ. Корпус штабĕ, 16. II. 42. Приказăн аяларахра асăннă копине командующи хушнă тăрăх пĕлсе тăма чаçсене ярса паратпăр.

Командующи вырăнне корпус штабĕн начальникĕ **Гютнер.**

Копи. Штаб 25. 1. 42.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче çĕрти çапăçусенче çаврăнăçусăр тата хытах мар вĕçекен самолетсемпе йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсемпе усă курма тиврĕ. Çак çапăçусенче çĕртен пенĕ пирки эпир питĕ те нумай самолет çухатрăмăр. Çĕрти войскăсене пулăшма çапăçăва кĕртнĕ пĕр соединенире çĕртен пенипе самолетсенчен 50 проценчĕ пĕтнĕ. Кун сăлтавне вырăссем сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçе лайăх организациленипе ăнлантармалла. Авиаци соединенийĕсенче çаксене асăрханă:

1. Вырăссен çĕрте çапăçакан кашни подразделенийĕх хăйсем çине тапăнакан самолетсем çине винтовкăсенчен тата пулеметсенчен перет. Пысăк мар лаптăках нумайăн пенипе эпир калама çук нумай самолет çухататпăр.

2. Вырăс юлашутçисем лашисем çинчен сиксе анаççĕ те, винтовкисене йĕнерсем çине хурса, хăйсем çине тапăнакан самолетсем çине пеме тытăнаççĕ. Пехота çурăм çине выртса сывлăшалла перет.

3. Самолетсем çине минометсенчен те переççĕ. Эпĕ çакна вĕсем пек тума мар, тĕслĕх вырăнне илсе кăтартатăп: вырăссем самолетсене хирĕç кĕрешес ĕçре çĕрти пур тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе те усă кураççĕ.

4. Вырăссем колоннăсен умĕнче çăмăл тата вăтам зенитнăй тупăсем туртарса пыраççĕ. Вĕсене çунасем çине вырнаçтарнă.

5. Пуринчен ытла тăвата кĕпçеллĕ пулеметсенчен пени хăрататъ. Вăл пулеметсене питĕ те лайăх пытарса вырнаçтарса лартнă: пересе яланах кĕтмен вăхăтра пеме тытăнаççĕ.

Вырăссем хăйсене атакăлакан авиаци соединенийĕсем çине персе пирĕн нумай самолетсене пĕтернĕ пекех, пирĕн чаçсен те противникăн самолечĕсене хирĕç пур тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе те кĕрешме пĕлмелле. Ку тĕрĕс иккенне çакă та кăтартса парать: 24-мĕш танковăй корпусра 1942 çулти январĕн 24-мĕшĕнче пулемет-пистолетран персех вырăс самолетне ÿкернĕ. Çавăнпа çакна асăрхаттаратăп: хамăр чаçсен малти линине яланах сигнальнăй паллăсемпе палăртса тăмалла. Линине палăртманни е ăна япăх палăртни хамăр самолетсене пĕтерме кăна пулăшать.

Алă пуснă **ФИБИГ»**

Нимĕç корпусĕн командующийĕ çырнă приказ чăн та ăса вĕрентекенскер. Нимĕçсемшĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен вĕренмелли те чылай иккен. Анчах нимĕç корпусĕн командующийĕ ку ыйтăва тĕплĕнех пĕлеймест-ха. Нимĕç авиацине хирĕç винтовкăсемпе тата пулеметсемпе кĕрешес ĕç Хĕрлĕ Çарта юлашки вăхăтра питĕ те анлăн сарăлса кайрĕ. Нимĕç корпусĕн командующине пулăшас майпа çак фактсене илсе кăтартма пулать. Сăмахран, Хĕрлĕ Çарăн 92-мĕш стрелковăй дивизийĕ, винтовкăсемпе автоматсенчен персе, кĕске вăхăтрах противникăн 62 самолетне пĕтернĕ, 65-мĕш стрелковăй дивизи 25 самолет персе ÿкернĕ, 259-мĕш стрелковăй дивизи — 21 самолет, 10-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи — 21 самолет персе антарнă. Нимĕçсен самолечĕсене 15—20-шер персе ÿкернĕ дивизисем вара вуншарăн шутланаççĕ. (ТАСС).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Калинин фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** пирĕн чаçсем ялне йышăннă чухне нимĕçсем васкаса чакнипе пăрахса хăварнă орудисем.
И. ФИГУРОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Мартăн 5-мĕшĕнче Захаровпа Акимочкин командирсен чаçĕсем тăшмана çĕнтерсе Хĕвеланăçнелле куçса пырса Юхнов хулине йышăнчĕç. **Укерчĕк çинче:** Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Юхнов хулине кĕреççĕ.
Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Икĕ герой

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Йăлтăрккa юрпа витĕннĕ сопка çинче автоматчик Зуевпа снайпер Лебедев огневой позици йышăннă. Боецсем тăшман еннелле тимлĕн пăхса выртаççĕ. Фашистсен лагерĕнче лăпкă мар, вĕсем таçта кайма, тем тума хатĕрленеççĕ.

— Фрицсем хатĕрленеççĕ.

Зуев хăйĕн юлташне çапла калать те тăшман малалла мĕн тунине тимлĕн сăнама тытăнать.

Боецсем шухăшлани тĕрĕсех пулать: пăртак тăрсанах тăшманăн пысăк отрячĕ пирĕн боевой хурал çинелле килме тытăнать. Зуевпа Лебедев юлташсем çапăçăва хатĕрленеççĕ. Тĕл персе вĕсем пĕр фашист хыççăн тепĕр фашистне стройран кăлараççĕ. Нимĕçсем вилнисем урлă сике-сике каçса, çаплах пирĕн еннелле килеççĕ. Ак, ĕнтĕ вĕсем Зуев окопĕ патнех çывхараççĕ. Зуев çухалса каймасть, фашистсене çывăхранах çунтарма тытăнать. Нимĕçсем чăтаймасăр каялла чакаççĕ, çапăçу хирне вилнисемпе аманнисем нумайăн выртса юлаççĕ. Зуев пеме чарăнать. Вăл нимĕçсем тепĕр хут тапăнасса питĕ лайăх пĕлсе тăрать, çавăнпа та пĕр патронне те сая ярасшăн мар. Пăртак тăрсан гитлеровецсем каллех атакăна ытканаççĕ. Автоматран питĕ те тĕл персе, автоматчик каллех вĕсене каялла тартать. Пирĕннисем вырнаçнă высота çине виççĕ хут тапăнса пăхнă хыççăн нимĕçсем хăйсен тактикине улăштарма шутлаççĕ. Чулсем хушшипе йăпшăнса пырса, вĕсем çывăхранах пирĕн паттăрсем çине гранатăсем пăрахма тытăнаççĕ.

Зуевпа Лебедев юлташсен хĕлсем калама çук япăхланса çитеççĕ. Вĕсем пĕр утăм чакмасăр, пĕр тумлам юн юлмиччен тăшмана хирĕç çапăçма тупа тăваççĕ.

Снайпер Лебедевăн куçĕ çивĕч, вăл пĕр гитлеровеца та вĕçертмест, вăл пенĕ пульăсем пĕри те сая каймаççĕ. Фашистсем пĕрин хыççăн тепри стройран тухаççĕ. Анчах та ак снайпер выртнă çĕрте окопра тăшман гранати çурăлса каять, Лебедев аллинчен винтовка тухса ÿкет, вăл геройсен вилĕмĕпе вилет.

Зуев пĕр-пĕчченех тăрса юлать. Апла пулсан та вăл çапăçма пăрахмасть. Тăшман пульли Зуевăн питне пĕçертсе илет, куçне юн тулать, ĕнтĕ вăл нимĕн те курми пулать. Анчах çапах та Зуев, ыратнине-мĕнне пăхмасăр, тимлĕн итлесе тăшман йĕлтĕрĕсен сассине илтет. Йĕлтĕрсем çывхараççĕ, Зуев кусем тăшмансем иккенне лайăх пĕлет — вăхăтлăха чарăнса ларнă автомат каллех ак вут пĕрĕхме тытăнать. Аманнă воин тăшмансене темиçе хутчен те каялла çавăрса хăвала-хăвала ярать. Çывăхрах ак граната çурăлса каять, Зуевăн сулахай алли йывăрланать, юр юнланса хĕрелме тытăнать. Граната ванчăкĕ пирĕн паттăрăн аллине татса пăрахать те — автомат ĕçлеме чарăнать. Зуев тăпран каять. Нимĕçсем пискерĕн кăшкăрашса, сухăрашса высота çине ыткăнаççĕ. Анчах та вĕсем иртерех савăннă-мĕн. Унччен те пулмасть, çапăçу хирне пирĕн красноармеецсем пырса çитеççĕ те фашистсен кĕтÿне вутпа çулма тытăнаççĕ. Фашистсем, вилнĕ тата аманнă салтакĕсене пуха-пухса, ăçтан килнĕ, çавăнталла тараççĕ.

Пулăшу килсе çитиччен высота çине тăшмана ямасăр тăнă икĕ геройăн паттăрла ĕçĕсемпе пĕтĕм часть мухтанать, боецсем хăйсен боевой юлташĕсем, Зуевпа Лебедев юлташсем мĕнле çапăçнă, вĕсем те çавсем пекех тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçма тупа тăваççĕ.

В. ЛЕЗИН.

Разведчик Иван Мельников

Госпитальре лайăх, çемçе койка çинче вырнаçнă красноармеец Филиппов хăйĕн юлташĕсене çапла каласа выртать:

— Пирĕн пулеметсем тăшмана çунтарнă чухне ĕç питех те аван пырать. Эх, аван-çке. Эпир засадăра, белофинсемпе юнашарах, пĕтĕмпех çывăхра сăнаса выртрăмăр. Пирĕн минăсем фашистла выльăхсене татăк-татăкăн вакласа сирпĕнтереççĕ. Блиндажсем, хĕçпăшал ванчăкĕсем сывлăшалла сирпĕнеççĕ. Пирĕн минометчиксем лайăх переççĕ. Вĕсен пемелли тĕллеве кăтартакан чаплă корректировщик пулнă, минометчиксене тĕрĕс пеме вăл пулăшса тăнă.

Госпиталь палатинчи итлекенсем хушшинче Иван Мельников та пур. Минометчиксене тĕл пеме лайăх кăтартса пыракан корректировщик çав пулнă иккен. Çапла Мельников хăйĕн чаплă ĕçĕсем çинчен пехотинецсем мухтаса каланине итлесе выртать. Чăнах та вăл, Мельников, миномет подразделенийĕн старши разведчикĕ, минометран минăсене ăçталла персе тăмаллине кăтартса пынă. Вăл тунă расчетсем тăрăх минăсем тĕлленĕ вырăна тĕрĕс лекнĕ, тăшмана вилĕм кÿнĕ.

Белофинсем наблюдательнăй пункта икĕ хутчен татса илнĕ, икĕ хутчен çавăрса илнĕ. Анчах иккĕшĕнче те хĕрлĕ воинсем тăшмана каялла сирсе ывăтнă, патнех çывхарнă фашистла çĕленсене пăшалсенчен персе вĕлерсе пĕтернĕ, татăлнă телефон пралукĕсене каллех хăвăрт сыпăнтарса, минометчиксене минăсене ăçталла пемеллине тĕплĕн кăтартса тăнă. Вара минăсем татах тăшманăн войскисем хушшине тĕрĕс лексе вĕсене çĕмĕрме тытăннă.

Çапăçăвăн иккĕмĕш кунĕ пуçланнă чухне, тул çутăлнă вăхăтра, белофинсем орудисем илсе пырса питĕ вăйлăн пеме тытăннă. Артиллерирен пенĕ вăхăтра хăйсем пирĕн еннелле атакăна килнĕ. Çак вăхăтра Мельников, пехотинецсемпе пĕрле, сопка çинче (лутра сăрт тÿпинче) выртнă. Белофинсем автоматсенчен таттисĕр персе тăнă, сăрт çинелле хăпарма тăрăшнă. Вĕсен йышĕпирĕннинчен темиçе хут та ытларах пулнă. Красноармеецсем сăртран 70 метра яхăн аяккалла кайса вырăнаçнă та белофинсене сăрт çине хăпарма чарман. Вара Рябов юлташ: — Юлташсем, ман хыçран. Урра! — тесе кăшкăрнă.

Атака тăвакан красноармеецсем тăшмана флангран пырса çапнă. Белофинсем сăртран аялалла тарма тытăннă. Мельников атака тăвакансен малти ретĕнче пулнă. Аллинче автомат тытса, вăл тăшмана пĕр чарăнмасăр хăваланă, автоматĕнчен пĕр чарăнмасăр персе пынă. Тăшман хăранипе ăçталла каймаллине те маннă, вăл пирĕн саперсем малтанах чавса лартнă фугассем çине пырса кĕнĕ. Фугассем çурăлса кайнă та, кунта темĕн чухлĕ белофин вилсе пĕтнĕ, вĕсен виллисем шурă юр çине тĕп-тĕрлĕн хуралса выртса юлнă.

Пирĕн часть оборонăна йышăннă. Пирĕн оборонăпа белофинсем хушшинче пулнă противникăн наблюдательнăй пунктĕнче телефон аппарачĕ тăрса юлнă. Мельников çав аппарата курнă та хамăр пата илсе килме шухăшланă. Вăл малалла шуса пырса аппарат патне çитнĕ, аппарата пралуксенчен уйăрса хамăр пата илсе таврăннă. Вăл çак ĕçе тунă чухне çывăхрах выртакан белофинсем ун çине темĕн чухлĕ пенĕ, анчах пульăсем Мельникова лекмен. Хăй вырăнне каялла таврăнса çитсен тин бандитсен пĕр пульли Мельникова хулпуççинчен лекнĕ.

Аманнă пулсан та, Мельников çапăçуран тухман, автомата аллинчен яман; ыттисемпе пĕрлех сиксе тăрса, тăшмана хирĕç контратакăна кайнă. Белофинсене каллех çĕнтерсе каялла хăваласа янă. Çакăн хыççăн вăл татах та ултă сехет хушши вăйлă çапăçура пулнă. Хăй аманнине пĕрре те асăрхаман.

Çапăçусенче чапа тухнă старши разведчик, ефрейтор Мельников — Хĕрлĕ Çарăн тивĕçлĕ воинĕ. Вăл Чăваш республикин ывăлĕ. Çапăçусенче хăйĕн паттăрлăхне кăтартнăшăн Командовани ăна пĕр хутчен мар тав тунă.

М. РЫБАКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Донбасри çапăçусем

[illegible]

Пирĕн чаçсем пуян трофейсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче 18 орудия, виçĕ мортира, 30 пулемет, 200 автомашина, 9 миномет, 164 винтовка, 2 радиостанци, 4,000 мина, 13,500 патрон.

[illegible]

Я. МАКАРЕНКО.
(«Правда» хаçатран).

Тăвансен масарĕ çинче тунă тупа

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Икĕ уйăх хушшинче фашистла ирсĕрсем М. ялĕнче хуçа пулса [illegible]

[illegible]

Тăвансен масарĕ çинче хурлăхлă митинг пулса иртрĕ. [illegible] (ТАСС)

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен производствăри ролĕ

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче комбинатри коммунистсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ ӳсрĕ. Вĕсем çĕнĕ ĕçсен организаторĕсем пулса тăраççĕ. Васкавлă заказсене пурнăçлас, чĕртавара перекетлес тата вырăнти ресурссемпе туллин усă курас тĕлĕшпе малта пырса, ыттисене пример кăтартаççĕ.

Çамрăк коммунистсем Евлампьевпа Шустов тата Прокопьев юлташсем цех начальникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Çак цехсем хăйсене панă заданисене кашни уйăхрах ирттерсе тултараççĕ. Вăл цехсенче стахановецсемпе двухсотниксен тата трехсотниксен йышĕ те ӳссе пырать. Евлампьев юлташ ертсе пыракан цехра нормăна тултарса ĕçлеймен çын пĕрре те çук, вăтамран илсен, кунта кашни смена плана 150—170 процент ирттерсе тултарать. Çамрăк мастер, комсомолка В. Мареева ертсе пыракан смена февралĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнчен пуçласа задание яланах 200 процент тултарать. Çак сменăри паллă стахановецсем Е. Грыжина, Шолкова, Савинкина, Лобачкова, Афанасьева юлташсем сложнăй станоксемпе ĕçлесе куллен виççшер норма тăваççĕ.

Юлашки вăхăтра чылай коммунистсене смена мастерĕсем, технически приемщиксем пулса ĕçлеме куçарнă. Кашни коммунист хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçлама тăрăшать. Вуннăмĕш номерлĕ цехра Сотниковпа Сорокин коммунистсем ертсе пыракан сменăсем февраль уйăхĕнче плана Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнă кун тĕлне ирттерсе тултарнă. Хальхи вăхăтра ку сменăсенче социализмлă ăмăрту тытах та анлăн сарăлса пырать. Рабочисемпе работницăсем нормăна икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Юлашки вăхăтра Подклетнов, Ерантаев, Грачев коммунистсем ертсе пыракан сменăсем те ĕçре паллă улшăнусем турĕç. Март уйăхĕнче вĕсем плана кашни кунах тултарса ĕçлеççĕ.

Подклетнов юлташ сменинче ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыни çакăнтан лайăх курăнать: март уйăхĕнче кунта двухсотниксен хисепĕ икĕ хут ӳсрĕ, трехсотниксем те пур. Сборщик Карпов, Баландаев, Ибрагимов, Баймуков юлташсем нормăсене 300—480 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Коммунист Яков Кондратьев нумаях та пулмасть столяр-сборщик пулнă, ун чухне вăл хăйĕн ĕç нормине 200—300 процент тултарса пынă. Виçĕ уйăх каялла ăна çĕнĕ ĕçе куçарчĕç, бригадир турĕç. Кондратьев юлташ бригадăна та часах малти рете кăларма пултарчĕ. Халĕ унăн бригади кашни кунах заданисене ирттерсе тултарать.

Производствăри коммунистсем хăйсен ĕçне политикăллă-массăллă ĕçпе тачăн çыхăнтараççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем цехсенче агитаторсемпе вулавçăсем, беседчиксем пулса ĕçлеççĕ. Цех начальникĕ Евлампьев юлташ кашни икĕ кунра тенĕ пекех рабочисем хушшинче тĕрлĕ ыйтупа калаçусем туса ирттерет. Февраль уйăхĕнче кăна вăл ун пек калаçусем 15 хут ирттернĕ. Вăл ирттерекен калаçусене рабочисем активлăн çӳреççĕ, пысăк хавхаланупа итлеççĕ. Евлампьев юлташ калаçура яланах вырăнти фактсемпе туллин усă курать. Иванов юлташ (вăл та цех начальникĕ) Совет Информаци бюровĕ пĕлтерсе тăракан хыпарсене хаçатсем çинчен вуласа панисĕр пуçне, час-часах уйрăм темăсем тăрăх калаçусем ирттерет.

Иртнĕ уйăхра унăн цехĕнчи рабочисем Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне вуласа тухса унпа палланнă хыççăн хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Халĕ чылай бригадăсемпе сменăсем хăйсен обязательствине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Малта пыракан Утехинăпа Болонина бригадисем март уйăхĕ пуçланнăранпах плана 150 процентран кая мар тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

Яманкассинчи агитколлектив

КАНАШ. Вăрçă фронтĕнче те, ĕç фронтĕнче те çĕнтерӳсем тума масса хушшинче политикăллă агитацие тĕрĕс те вăйлăн туса пыни кирлĕ. Çакна Яманкасси ялĕнчи агитколлектив лайăх ăнланса илнĕ. Агитколлектив 20 çынран тăрать. Ăна комсомол организацийĕн секретарĕ А. Софронов юлташ ертсе пырать.

Агитаторсен кашниннех хăйсене çирĕплетсе панă участоксем пур. Çав агитаторсемпе пĕрле участоксенче вуншар çамрăксем ĕçлеççĕ. Агитколлектив ялти мĕнпур ĕçсемпе интересленет. Ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт курать, вĕсене тӳрлетме пулăшать. Çавăнпа та вара ялсоветĕ те хуçалăхпа политикăллă кампанисене вăхăтра тытăнса, вĕсене пысăк хавхалăхпа пурнăçласа пырать. Иртнĕ çул укçа-тенкĕ пухмалли 4-мĕш квартал планне ялсовет кăçалхи январĕн 1-мĕш тĕлне 100 процентран ирттерсе тултарнă.

Агитаторсем укçа-тенкĕпе ялпала лотерейин билечĕсене сарас ĕçе лайăх туса ирттерчĕç. Лотерея билечĕсене ялсоветăнчи колхозниксем пурĕ 1500 тенкĕлĕх çырăнчĕç тата укçине те çав вăхăтра тӳлесе татрĕç. Ку ĕçре агитаторсем хăйсем аван пример кăтартрĕç.

Колхозниксем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттернĕ чухне вырăнти пахха тĕслĕхсене илсе кăтартни çитĕнӳсем тума пысăк пулăшу парать. Анчах та çакна агитаторăн колхозниксен кăмăлĕпе ĕçĕсене пĕлсе тумалла. Анисов агитатор пĕрмаях колхозниксем хушшинче ĕçлет, вĕсене кашниннех лайăх пĕлсе тăрать. Çавăнпа та вăл хăйĕн участокĕнче яланах паллă çитĕнӳсем тăвать.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз 1942 çула государство умĕнчи обязательствăсене пурне те пурнăçланипе кĕтсе илчĕ.

Агитаторсем хăйсен ĕçĕнче Сталин юлташ Октябрь уявĕн кунĕсенче тунă доклада тĕп вырăна хурса ĕçлеççĕ. Çулпуçăн кăтартăвĕсене колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса панă. Çакăнпа пĕрлех агитаторсем халăха тăшман сыхлăшран килсе тапăнасран мĕнле сыхланма кирлине те вĕрентеççĕ. Çавăнпа та халĕ ялсоветăнчи колхозниксем ПВХО тата ГСО тĕлĕшпе пĕлмелли правилăсене те çителĕклĕн вĕренинĕ.

И. МАКСИМОВ.

Вĕренӳри отличниксем комсомола кĕреççĕ

ЕЛЧĔК. Комсомолăн Çĕнĕ Пăва вăтам шкулĕнчи пуçламĕш организацийĕнче çак кунсенче комсомол ретне М. Егоровпа П. Игнатьев юлташсем кĕчĕç. Вĕсем 9-мĕш класра вĕренекен отличниксем, допризывниксем, пулас воинсем. Çавăнпа вĕсем çар ĕçне те отлично вĕренсе пыраççĕ.

Кандидатсене вĕрентсе ӳстерес ĕçе вăйлатар

Отечественнăй вăрçăн йывăр кунĕсенче Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕпе ĕçхалăхĕ хушшинчи çыхăну çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пырать. Халăхăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем хăйсен малашнехи пурнăçĕпе кĕрешĕвне рабочи класăн малти отрячĕпе—Ленин—Сталин партийĕпе çыхăнтараççĕ. Фронтра вилĕмрен шиклენмесĕр çапăçакан, тылра вăя шеллемесĕр ĕçлекен патриотсем çак историллĕ кĕрешӳри çĕнтерĕве коммунистăн хисеплĕ ячĕпе тума парти ретне кĕреççĕ.

— «Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă хаяр кунсенче мана ВКП(б) членне илме ыйтатăп»,—тесе çырать хăйĕн заявленийĕнче паллă стахановец, ССР Союзĕн медальне илнĕ И. Осипов юлташ. Вăл Канашри вагонсем юсакан заводра пĕр харăс темиçе станокпа ĕçлет, ĕç нормине тăтăшах 200—300-шер процент, хăшпĕр чухне 600—700 процент таран та тултарать. Партин Канаш райкомĕ И. Осипов юлташăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пулăшрĕ, ăна ВКП(б) членне илчĕ.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) Канаш районĕнчи организацийĕ кандидатсене ĕçре вĕрентсе пырас, тивĕçлисене парти членне илес ĕçе нумай хут лайăхрах тума тытăнчĕ. Юлашки уйăхсенче ВКП(б) ретне халăха çутта кăларас ĕçре пархатарлă ĕçлекен Семенов юлташа, Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи пултаруллă работникĕсене: старши стрелочнике Гуськова, сторож пулса ĕçлекен Ивановăна тата Ханенко юлташсене илнĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вагонсем юсакан заводри парторганизаци кандидатсем хушшинче ĕçлессине лайăхлатрĕ. Юлашки 7—8 уйăх хушшинче кунта 25 çынна ВКП(б) кандидатĕнчен члена куçарнă. Вĕсем пурте производствăра малта пыракансем, общественнăй ĕçпе парти пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçлекен юлташсем.

Чаплă тимĕрçĕ Федин юлташ нормăна кашни сменăрах 300—400-шер процент тултарса пырать, çакăнпа пĕрлех цехри осоавиахим организацин ĕçĕпе интересленет. Талызинская юлташ çамрăксене слесарь ĕçне вĕрентет, çав вăхăтрах вăл рабочисем хушшинче пыракан ăмăртăва тĕрĕслесе тăрать. Вĕсене иккĕшне те производствăра ырă тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн «Сталинла призывăн ударникĕ» значокне парса наградăланă. Мавенков, Калашникова юлташсем производствăра халичченхинчен 2—3 хут хăвăртрах тухăçлăрах ĕçлеççĕ, Демьянков, Маркова мастерсем хăйсен производствăллă единицисене пултаруллă ертсе пыраççĕ.

Пирĕн парти рабочисен, колхозниксен тата совет интеллигенцийĕн йышлă активĕпе алла-аллăн çыхăнса ĕçлет. Вăрçă кунĕсенче çак актив чылаях ӳсрĕ, вăл парти ретне çĕнĕрен çĕнĕ йыш парса тăракан çăлкуç пулса тăчĕ. Парти организацийĕсен çав актива политикăллă-массăллă ĕçе анлăн явăçтармалла, ĕçре вĕсене тивĕçлĕ вырăн йышăнтармалла. Ĕçе чĕререн парăнса туса пыракан патриотсене большевиксен партийĕн ретне илмелле. Кандидат стажĕн вăхăтне усăллăн ирттермелле. Çав хушăра большевиксен партийĕн членĕ пулма хатĕрленекен çыннăн хăйĕн пултарулăхне ĕçре кăтартса памалла, политикăллă пĕлӳлĕхĕпе активлăхне ӳстермелле. Кандидат стажĕ—партине кĕрекен çынна тĕрĕслесе пĕлсе çитмелли тапхăр пулса тăрать. Çавăнпа та парторганизацисен çамрăк коммунистсене ĕçре куллен вĕрентсе çирĕплетмелле, парти пурнăçне активлăн явăçтармалла, вĕсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерсе пымалла. Çакна Канаш районĕнчи партин пуçламĕш организацийĕсем пурте мар-ха кирлĕ пек туса пыраççĕ. Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем кандидатсемпе ытла та начар ĕçлеççĕ, сайра хутра вĕсен канашлăвне ирттернипех лăпланаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ районри партторганизацинчи мĕнпур кандидатсенчен 85 процентĕн кандидат стажĕ тухнă. Райсовет, Уполнкомзаг çумĕнчи тата Аччари пуçламĕш парторганизацисенчи кандидатсен пурин те пекех кандидатра тăмалли срокĕсем тухнă.

Канаш станцин деповĕнчи парторганизацире 6 кандидат. Вĕсен пурин те кандидатра тăрас срокĕсем тухнă. Парторганизаци секретарĕ Сергеев юлташ вĕсемпе куллен ĕçлеме кирлине манна. Çакна парторганизаци кандидатсене тăтăшах ĕç хушманнинчен те курма пулать. Уйрăм кандидатсене депори рабочисем хушшинче хаçатсем вуласа пама хушнă. Анчах вĕсем хушнă ĕçе мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслемен. Çавăнпах хăшпĕр кандидатсем хăйсен политикăллă активлăхне чакарса пыраççĕ. Веденский, Кулыков, Смыслов тата Уткина кандидатсем çулталăк хушшинче парти пухăвĕсенче пĕрре те тухса калаçман. Тихонов, Баканов, Беспалов тата Герасимов кандидатсем партиллĕ ĕçе сахал хутшăнаççĕ.

ВКП(б) кандидачĕсем—партин ыранхи членĕсем. Кандидатсене ВКП(б) членне куçма хатĕрлесси, вĕсенчен Ленин—Сталин партийĕн тивĕçлĕ членĕсем туса ӳстересси — парторганизацисен кулленхи ĕçĕ.

Т. ИВАНОВ.

Комсомолец-бригадир

ШАХАСАН. Енĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăна нумаях пулмасть комсомол ретне кĕнĕ И. Павлов юлташ ертсе пырать. Вăл тырпул тухăçлăхĕ çуркуннехи ĕçсене тивĕçлипе туса хăварнинчен килнине лайăх пĕлет. Çавăнпа та вăл колхозниксене çуракине хатĕрленес ĕçе тăрăшсах мобилизацилерĕ. Вĕсемпе калаçусем туса ирттерчĕ, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен чĕнĕвне сӳтсе-яврĕ. Бригадăра «Стахановец» ятлă стена хаçачĕ тухма пуçларĕ. Унта бригадăри хастарлă колхозниксен ĕçĕсемпе çитĕнĕвĕсене çутатса параççĕ, кая юлса пыракансене критиклеççĕ. Çапла майпа 4-мĕш бригада колхозра малта пыракан бригадăсенчен пĕри пулса тăчĕ. Бригадăри колхозниксем 48 гектар çинче юр тытса хăварчĕç, 3 центнер фекали, 4 центнер кĕл пухрĕç. Вырăнти удобренисене пухас ĕçе шкул ачисене явăçтарчĕç. Ялхуçалăх машинисене — 5 плуга, 13 сӳрене юсаса хатĕрленĕ. Вăрлăха тасатса сортланă. Халĕ колхозниксем пăрса, чина вăрлăхĕсене алăпа суйлаççĕ.

Г. ШАШКОВ.

Лайăх подсобнăй хуçалăх

Хальхи вăхăтра подсобнăй хуçалăх организацилени ĕççыннисен апат-çимĕçпе лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк пулăшу парать, государство фондне перекетлет. Анчах подсобнăй хуçалăхра ĕçе пĕлсе организацилени кирлĕ. Ку енĕпе Шупашкарти больницăн подсобнăй хуçалăхĕ лайăх пример кăтартать. Кунта подсобнăй хуçалăх ĕçне 65 çулти Шумков юлташ, пенсионер, ертсе пырать.

Шумков юлташ больницăра 1934 çултанпа ĕçлет. Çак хушăра вăл больница килкартине илемлĕ чечек пахчи туса хучĕ. Вăл ĕçе пырса кĕнĕ чухне больница килкартинче чул куписем, пылчăк, лачака выртнă. Килкартинчи чылай пысăк çĕр лаптăкĕпе пĕр усă та курман. Шумков юлташ кĕске вăхăтрах больница килкартине йĕркене кĕртрĕ. Вăл, килкартинче клумбăсем туса, илемлĕ чечексем тата тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем лартса ӳстерчĕ. Халĕ Шумков юлташ килкартинчи çĕрĕн пĕр вершокне те ахаль выртармасть. Çав çĕр çинче вăл икшер хут пахча-çимĕç туса илет. Вăл теплица тата 40 рамăллă парник турĕ. Çавăнта Шумков юлташ чечек калчисем, ир пулакан пахча-çимĕçсем чылай туса илет. Ун хыççăн сухан, çĕрулми лартса ӳстерет. Иртнĕ çулта вăл чечек калчисемпе помидор калчисене сутсах 2.260 тенкĕ тупăш илнĕ. Парникре 61 килограмм симĕс сухан, 282 штука хăяр çитĕнтернĕ. Кунсăр пуçне йăран çине лартса 169 килограмм хăяр, 88 килограмм хăмлаçырлипе хурлăхан çырлисем пуçтарнă. 162 килограмм хĕрлĕ кăшман, 1.060 килограмм выльăх кăшманĕ, 472 килограмм кавăн, 2.869 килограмм помидор туса илнĕ.

Шумков юлташ ку вырăнсенче ӳсмен пахча-çимĕç культурисене ӳстерме тăрăшать. Иртнĕ çулта вăл кабачки текен культурăна опыт тума акса 15 штука ӳстернĕ. Кăçал çав культурăна чылай ӳстерме шутлать.

Хула исполкомĕ больницăна уйра 3 гектар çĕр уйăрса панă. Çав çĕртен те Шумков юлташ пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта вăл выльăхсене çитерме 2,5 гектар çине сĕлĕпе вика акса 7500 килограмм выльăх апачĕ туса илнĕ. 0,5 гектар çине çĕрулми лартнă. Çĕрулми 4.400 килограмм пулнă. Хула исполкомĕ уйăрса панă 5 гектар уçланкăсенчен 12 тонна утă пуçтарнă.

Больницăн кăçал 5 ĕне, иртнĕ çулта 4 ĕне пулнă. Çав 4 ĕнерен 8.353 литр сĕт суса илнĕ. Кунсăр пуçне подсобнăй хуçалăх чирлĕ çынсене çитерме 167 килограмм ĕне ашĕ, 180 килограмм сысна ашĕ, 43 килограмм пăру ашĕ панă. Подсобнăй хуçалăх кашни çулах сысна çурисем сутать. Иртнĕ çулта, сапла, 12 çурă сутнă.

Çулталăк хушшинче больницăн подсобнăй хуçалăхĕ малтанлăха шутланă тăрăх 20 пин тенкĕлĕх ытла тупăш панă. Халĕ Шумков юлташ хăйĕн подсобнăй хуçалăхĕнче çуракине хатĕрленет. Унăн вăрлăхсем çителĕклĕ. Тислĕк хатĕрленĕ. Парник валли тăпра хатĕр. Халĕ ĕнтĕ вăл теплицăра ĕçе тытăннă та.

Шумков юлташ 65 çула çитнĕ, вăл пенсионер, анчах çапах та халĕ хăйне çирĕп тыткалать.

— Хам ĕçпе мухтанма пултараймастăп, вăй çитнĕ таран ĕçлеме тăрăшатăп,—тет вăл.

Шумков юлташ вăхăта шутласа тămасть, вăл çулла больница килкартинче хĕвел тухиччен ĕçлеме пуçлать те çĕрлеччен унтах ĕçлесе çӳрет.

Анчах пур предприятисем те подсобнăй хуçалăхпа çавнашкал усă курмаççĕ. Сăмахран, ликеро-водочнăй заводăн иртнĕ çулта та 10 гектар çĕр пулнă. Çав çĕр çинче вĕсем хăйсене çителĕклĕ вăрлăх та туса илеймен. Сыснасене çитерме те апат çук. Хула Совет исполкомĕ уйăрса панă çĕрсемпе лайăх усă курмалла.

М. ЧУПРАКОВА.

Çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем пухатпăр

СĔНТЕРВАРРИ. Районри учрежденисенче, предприятисемпе колхозсенче Сталин юлташăн приказне ăнлантарса пачĕç.

Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артельре ĕçлекенсен пухăвĕ пулчĕ. Унта Сталин юлташăн приказне вуласа пачĕç. Кайран нумайĕшĕсем тухса калаçрĕç. Вĕсем приказ тылри ĕççыннисене фронта куллен пулăшса пыма чĕннине палăртрĕç. Ун хыççăн ĕçлекенсем хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

Тепĕр куннех рабочисем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлама тытăнни палăрчĕ. Уйрăмăнах фронтовой бригадăсенчи çамрăксем малта пыраççĕ. Сăмахран, Бобкова юлташ кулленхи нормăна 230 процент, Бекренева, Рудзь 200 процентран пуçласа 220 процент таран, Шалина, Дубман, Сударева, Китаева юлташсем 150—190 процент тултарма пуçларĕç. Халĕ кунта пурĕ виçĕ фронтовой бригада ĕçлет.

Васкавлă заказсем пурнăçлакан цехри рабочисем пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Сталин юлташăн приказне сӳтсе-явнă хыççăн ĕç тухăçлăхĕ уйрăмăнах çĕкленчĕ. Кунти рабочисем нормăна 110—120 процент тултарса пынă пулсан, халĕ Гордеева, Иванова, Краличкина, Просвиркина юлташсем 2-шер норма ытла тултарма пуçларĕç.

«Парижская Коммуна» артельре ĕçлекенсем те Сталин юлташăн приказне вуласа тухнă; вĕсем пурте пĕр шухăшкăмăллă пулса, çак уйăх планне 110 процентран кая мар тултарма йышăннă. Халĕ çав обязательствăна тултарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Районри колхозниксемпе колхозницăсем те приказа сӳтсе-яврĕç. Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче приказа вуласа тухрĕç. Çавăнтах колхозниксем фронта пур майсемпе те пулăшма сăмах пачĕç, оборона фондне пĕр ĕне тата пĕр-тонна тырă пама пулчĕç.

А. РАЗИН.

Финанс ĕçĕнче малта пыракансем

СОВЕТСКОЕ. Укçа-тенкĕ отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пысăк вырăн йышăнса тăнине аван ăнланса илнĕ ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртеççĕ. Ку тĕлĕшпе Çухра ялсовечĕ пуринчен малта пырать, вăл пĕрремĕш квартал планне 140 процент тултарнă. Çавăн пекех Турай ялсовечĕ — 138 процент, Александровски — 124,2 процент, Мăн Чураш—114,3 процент, Хурамалăх—110,9 процент, Вăркасси—104,8 процент, Этмен — 102,8 процент тата Тойкилт — 100,9 процент тултарнă. Финанс работникĕсемпе ялсовет работникĕсем хушшинче укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту кунран кунах вăйланса пырать.

Я. СИГАЙ.

Çутта маскировка тăвасси çинчен татах тепĕр хут

Тăван çĕршыва сыхласси кашни совет гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Халăх пурăнакан пунктсене, промышленность предприятийĕсемпе учрежденисене тата пĕтĕм халăх пуянлăхне урнă тăшман тапăнассинчен яланах тĕплĕн сыхласа тămалла. Ку ĕçе ачасенчен пуçласа ваттисене çитиччченех пурин те тума кирлĕ.

Отечественнăй вăрçăн пысăк хăрушлăхлă кунĕсенче ӳпĕк-сӳрĕк, сапаланса пурăнни фронт умĕнче, çавăн пекех тата пĕтĕм çĕршыв умĕнче те преступлени туни пулса тăрать. Ку вăл шалти тылра пурăнакансене пĕр пекех пырса тивет.

Гитлерла бандитсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене пирĕн сыхлăхсăр тăракан вырăнсенче тума тăрăшаççĕ. Çавăнпа та яланах сыхă тămалла: сӳрĕклĕхе, дисциплинăсăрлăха, юхăнса пурăнас йăлана пĕтермелле. Ун пек йĕркесĕрлĕх вăл пирĕн оборона ĕçне хавшатать.

Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар нимĕçсен гитлерла захватчикĕсене хытă хĕстерсе пырса каялла хăвалать. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапса тискер тăшмансене хамăр çĕр çинчен кăларса ывăтас кун инçе мар, «пĕтĕм Совет çĕршывĕ çинче хĕрлĕ ялавсем каллех çĕнтерӳллĕн ялкăшма тытăнас вăхăт инçе мар ĕнтĕ», тенĕ Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа панă хăйĕн приказĕнче. Анчах çакăнпа пĕрлех пире Сталин юлташ фронтра халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма хушмасть. «Тăшман вăйлă-ха. Ăнăçусем тăвас тесе, вăл юлашки вăйĕсене пухĕ. Вăл мĕн чухлĕ ытларах поражени тӳсĕ, çавăн чухлĕ ытларах тискерленсе пырĕ». (Сталин).

Аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартса панисене яланах асра тытмалла, тискер тăшман инçетри тылсем çине сывлăшран пырса тапăнма пултарассине пирĕн манма юрамасть. Çавăнпа та хамăрăн хуласене, ялсене, промышленность предприятийĕсене, транспорта тата ыт. те тăшман килсе тапăнассинчен пирĕн пĕрмаях сыхă тытмалла. Тăшман сывлăшран тапăнасран сыхă тămалли майсенчен пĕри вăл—çуртсенчи тата урамсенчи çутăсене хупласа тĕттĕмлетесси, маскировка тăвасси пулать.

Çуртсенчи тата урамсенчи çутăсене маскировка тума кирли çинчен хаçатсенче те пĕр хутчен мар çырнă, ăнлантарса панă, ку тĕлĕшпе пĕтĕм çĕршыв умĕнче ответ тытмалла пуласси çинчен уйрăм постановленисемпе те асăрхаттарнă. Апла пулин те, хăшпĕр çынсем ку таранччченех çутта маскировка тумалли правилăсене пăхăнмаççĕ. Асăрхаттарнă хыççăн та çаплах çак правилăсене пăсаççĕ. Çакна пула вĕсем хуласене, халăх пурăнакан пунктсене фашистсем сывлăшран килсе тапăнас хăрушлăх умне тăратаççĕ.

Çутта маскировка тумалли правилăсене пăсакансем пирĕн республикăра сахал мар тупăнаççĕ. Ун пек çынсене айăпласа милици органĕсем пĕр Шупашкар хулинчех чылай протокол çырнă.

Çутта маскировка тумалли правилăсене пăснăшăн Шупашкарта «Строитель» заводăн директорĕ Круглов çине 75 тенкĕ штраф хунă; Ленинград урамĕнчи 8-мĕш №-лĕ çуртăн коменданчĕ Ляшко çине 100 т. штраф хунă; Урицкий урамĕнчи 48-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакан Стародубский çине 75 т хунă тата ыт. те.

Куславкка районĕнче çутта маскировка тăвас правилăсене пăснăшăн темиçе çынна ответ тыттарнă, вĕсенчен асăннă правилăсене пăсакансем: О. П. Медова—ачасен сачĕн заведующийĕ, Л. А. Винокуров—заводри рабочи, Е. Л. Изотова—Куславкка поселокĕнче пурăнакан гражданка тата ыт. те шутланаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă решени тăрăх, автотранспортра çутта тĕттĕмлетес йĕркене пĕтермелле пулчĕ. Çакăн хыççăн Канаш тата Çĕмĕрле районĕнчи учрежденисемпе предприятисенче те çутта маскировка тăвас йĕркене пăсма тытăннă. Ку тĕпренех йăнăш япала. Çакă вăл асăннă районсенчи учрежденисен, организацисен тата предприятисен руководителĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕн решенине ăнланманнинчен килнĕ. Совнарком решенийĕ çутăсене уçма автотранспорта çеç ирĕк парать, урăх никам та унпа усă курма пултараймасть.

Хăшпĕрисем тата çапла шутлаççĕ: урам хушшинче чĕлĕм туртни мĕнех вара вăл? Манăн чĕлĕм çутине никам та асăрхама пултарас çук вĕт, теççĕ. Анчах та çапла шутлакансем хăйсем чĕлĕм тивертнипе е чĕлĕм вучĕпе нимĕçсен сывлăшри вăрă-хурахĕсене сигнал пани çинчен ăнланмаççĕ. Сывлăшри тăшман летчикĕшĕн çĕр çинче курăнакан кашни вут-хĕм çутиех унта халăх пурăннине пĕлтерекен паллă пулса тăрать. Çавăн пек çутă тăрăх чухласа, вĕсем бомба пăрахма пултараççĕ.

Хăшпĕрисем тата çутта тĕттĕмлетессине пĕр ячĕшĕн çеç çиелтен тăваççĕ. Чӳречесене хулăм хутпа, хаçатсемпе е шурă материалсемпе çеç карса лартаççĕ. Ун пек япаласем карнипе фашистсен самолечĕсенчен мар, шăнасенчен çеç сыхлама пулать. Пĕр енчен, ун пек хутсемпе е шурă материсемпе çеç карни пӳртри çутта тулалла тухма чараймасть, тепĕр енчен тата—хут вăл часах шăтса, çурăлса пĕтсе, шăтăк çурăксенчен уйрăм çутă пайăркисене те вăйлăн кăларса тăма пултарать. Нумайĕшсем чӳречисене карнă хыççăн пӳлĕмри çутă тулалла тухнипе тухманнине сăнама тула тухса пăхма та ӳркенеççĕ.

Тата çакăн пеккисем те пулаççĕ. Лампа çунакан пӳлĕмĕн чӳречисене хут татăкĕсемпе каркаласа янă, çав вăхăтрах юнашар пӳлĕмре лампа çутман пирки унăн чӳречисене нимĕнпе те карса хупламан. Çутă пӳлĕмпе тĕттĕм пӳлĕм хушшинчи алăкĕ уçах выртать. Çакна пула лампа çути тĕттĕм пӳлĕм витĕр тулалла тухса таçта çитиех ялкăшать. Ку çутă—тăшман самолечĕшĕн çителĕклĕ ориентир пулма пултарать. Анчах та хваттер хуçи ун пирки нимĕн те шухăшламасть.

Хăшĕсем тата хăйсен çурчĕсен урам еннелли чӳречисене карса тĕттĕмлетеççĕ те, килкарти енчи чӳречисене уçах хăвараççĕ. Тăшман самолечĕшĕн пулсан хуть урам еннелли, хуть килкарти еннелли чӳрече çутаттăр, — пурĕ пĕрех. Вăл пур çĕртен тухакан çутăпа та усă курма пултарать, çавăнпа та кашни чӳречене тĕплĕн карса тĕттĕмлетмелле.

Хăшĕсем чӳречесене кармалли материал тупма йывăр тесе тăраççĕ. Çак сăлтавпа çутта маскировка тăвас правилăсене пăсаççĕ. Ку та тĕрĕс мар. Кашни килтех чӳречене кармалли кивĕ материсем те пулма пултараççех. Çине тăрсан, вĕсемпе лайăххах усă курма пулать.

Примерлă совет çыннисем кирек мĕнле вут çуттинчен те сыхланма кирлине лайăх ăнланаççĕ, харпăрхăй хваттерĕсенчен пĕр çутă пайăрки те кăлармаççĕ, урам хушшинче е тулта чĕлĕм те турттармаççĕ. Пурин те çав примерлă çынсем пек пулма тăрăшмалла.

Каç пулсан хула хушшинче ниçта та пĕр çутă пайăрки те курăнмалла мар. Анчах та пирĕн ку тĕлĕшрен кирлĕ правилăсене е пĕлсех, е пĕлмесĕр пăсакансем паян кунччченех пур-ха. Вĕсемпе кĕрешмелле.

Кашни совет гражданинĕн çутта маскировка тăвас правилăна влаçсенчен хăранипе мар, хăйсем ăнланнипе тытса пымалла. Пĕлсе е пĕлмесĕр яракан кашни çутă пайăрки пĕтĕм халăх пурăнакан пунктшăн çавтери пысăк инкек кӳме пултарассине яланах асра тытса тămалла.

Çуртсенчи, пӳлĕмсенчи çутта тулалла тухассинчен темиçе тĕрлĕ майпа та хупласа чарма пулать. Хупмалли япаласене йывăçран, материрен, тимĕртен, хутсенчен тата ыттинчен те туса хатĕрлеме пулать.

Пирĕн Чăваш республикинче çутта маскировка тăвассинчен пĕр хула та, пĕр ял та, пĕр станци те, пĕр промышленноçлă предприяти те, пĕр учреждени те тата транспорт та хăтăлма пултараймасть. Каç пулсанах пур çутта та пĕтĕмпех тĕттĕмлетмелле, маскировка тумалла.

Çутта маскировка тунипе пĕрлех электроэнергие те перекетлеме кирлĕ. Ку вăхăтра нумай предприятисемпе учрежденисенче тата уйрăм хваттерсенче те лампăсем çĕрĕпех çунса тăраççĕ. Çакна пула хулара электроэнерги çитменни те пулать.

Кашнинех çутă кăлармалла мар тăвас тесен, чӳречесене мĕнпе хупламалли çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхмалла. Хупламалли япаласене тул çутăлсан илсе хумалла, каç пулсан çакса ямалла тăвас пулать. Чăн та, ку тĕлĕшрен нумайĕшĕ çак ĕçе кашни кунах туса тăма йывăр теме пултараççĕ. Анчах та вăрçă вăхăтĕнче йывăрлăхсем сахал маррине кашниех лайăх астуса тămалла. Вăрçă вăхăчĕ кашни ĕççынни умне çавтери йывăр ĕçсем, йывăр задачăсем кăларса тăратать. Хамăрăн тăван çĕршыва çĕмĕрсе кĕнĕ тискер тăшмана эпир çав йывăрлăхсене тӳсĕмлĕн çĕнтерсе пынипе çеç аркатса тăкма пултаратпăр. Çавăнпа та пирĕн паянхи кун кирек мĕнле йывăрлăха та тĕплĕн çĕнтерме пĕлмелле.

Çутта маскировка тăвас правилăсене тĕплĕн пурнăçласа пыма предприятисемпе учрежденисен тата общественнăй организаци руководителĕсен ку тĕлĕшпе ятарласах пĕрер ответлă çын уйăрса хумалла. Ку çын çутта маскировка тăвас ĕçе тĕрĕс туса пырассишĕн яланах ответлă пултăр.

Милици работникĕсен çутта маскировка тумалли правилăсене кам мĕнле тытса пынине хытă асăрхаса тămалла. Ку правилăсене пăсакансемпе кĕрешме милицие совет общественноçĕн, комсомолецсен, пионерсен пулăшмалла. Кунта кӳршĕ çыннине кӳршисем асăрхаса тăни те кирлĕ.

Çутта маскировка тумалли правилăсене яланах пăсакан хула çыннисене, ман шутпа, электроэнерги пама чарсан та аван пулмалла. Ку правилăсене юриех пăсса тăракансене, паллах, вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх хыттăн айăпласа суда памалла.

С. АНДРЕЕВ.

Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Вагонсем юсакан заводра

Совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçнă вăхăтра партин Канашри вагонсем юсакан заводри организацийĕ рабочисемпе служащисем тата вĕсен çемьисем хушшинче политикăллă агитацие аван йĕркелерĕ. Паллах, ку ĕçре Сталин юлташ тухса каланă сăмахсене тĕп выранă хунă.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе политикăпе çирĕп коммунистсене явăçтарнă. Вĕсем агитаци ĕçне производствăллă задание тултарас, рабочисен ĕçри дисциплинине çирĕплетес ыйтупа çыхăнтарса пыраççĕ.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче заводри агитколлектив ертсе пынипе тĕнчери лару-тăру çинчен, çĕршыври юлашки хыпарсем çинчен темиçе доклад, калаçу ирттернĕ. Агитаторсене поэт Самойский, професcор Кузнецов, Бакаров юлташсем пулăшаççĕ. Вĕсем рабочисем хушшинче совет халăхĕн нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ территори çинчи партизанла кĕрешĕвĕ çинчен, совет войскисен паттăрлăхĕ çинчен, нимĕç войскисене Мускав патĕнче çапса аркатни çинчен тата ытти нумай тĕрлĕ темăсемпе те калаçусем ирттернĕ.

Стена хаçачĕ те пысăк вырăн йышăнса тăракан пулчĕ. Февраль уйăхĕнче цехсенче 17 номер стена хаçачĕ тата темиçе боевой листок тухнă. Кашни кунах, радиопа пĕлтернĕ хыççăн, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕпе листовка тухать.

«Совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă» темăпа темиçе вуншар лозунгсемпе плакатсем хатĕрленĕ. Цехсенче, завода кĕнĕ çĕрте, завод площадкинче рабочисене, инженерно-техническая работниксене хуçалăхри чирпĕслĕхшĕн, металсене перекетлессишĕн кĕрешĕве тухма чĕнекен илемлĕ плакатсем çакăнса тăраççĕ.

Кашни цехра кăтарту хăми çакăнса тăрать. Унта ĕç планне тата ăна кам мĕнле пурнăçланине курма пулать. Чи лайăх стахановецсемпе стахановкăсен фото-ÿкерчĕкĕсенчен витрина тунă. Стенасем çинче плакатсем: «Кашни ытлашши процент тăшмана çапать», «Эсĕ фронта мĕнпе пулăшнă?», «Хĕрарăмсем, фронта кайнисен вырăнне тăрăр!». Вĕсем рабочисене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Агитациллĕ ĕçе йĕркелени производствăлла плана тултарнă çĕрте аван палăрать. Малтан никама паллă мар пулнă юлташсем, халĕ нумайĕшĕсем производствăра малта пыраççĕ, лайăх агитаторсем шутланаççĕ. Вĕсем ыттисене ăнлантарса парса та, ĕçпе те хăйсен юлташĕсене лайăх ĕçлеме чĕнеççĕ. Вагонсем тăвакан цехри сверловщик-комсомолец Блохин нормăна 200—300 процент тултарать. Çав вăхăтрах вăл агитатор пулса ĕçлет. 14-мĕш цехри профсоюз комитечĕн председателĕ токарь Бельский, нормăна 400 процент тултарса ĕçлекенскер, тата Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулнă ăмăртура куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав илнĕ фронтовой бригадăн бригадирĕ комсомолец Чернухин юлташсем лайăх производственниксем тата агитаторсем.

Тимĕрçĕ цехĕнчи парторг тимĕрçĕ Третьяк юлташ хăйĕн цехĕнчи рабочисене фронтри пек ĕçлеме хавхалантарать. Вăл лайăх агитатор кăна мар, примерлă производственник та пулса тăрать. Вăрçă кунĕсенче вăл яланах сменăра 3—4 норма тултарса ĕçлет. Утиль цехĕнчи комсорг Харлампинде юлташ заводăн политикăллă тата хуçалăх пурнăçне активлăн хутшăнать. Халь ăна мастер пулма уйăрнă.

Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕ тăвар

СЕНТЕР. Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхозăн пуçарăвĕпе районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар валли выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк çитĕнтерсе самăртса параççĕ.

Хăпас ялсоветĕнчи «КИМ» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 5 сысна, 1 пăру, 21 сурăх, 10 хур-кăвакал, 73 чăх çитĕнтерсе самăртаççĕ. Мăн Хураçкари «Ядро» колхоз членĕсем хăйсен килĕсенче пĕр сысна, пĕр пăру, 4 хур-кăвакал, 59 чăх çитĕнтерме пулчĕç.

Районĕпе илсен, ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕ тума 21 ĕне, 45 сурăх, 71 сысна, 79 хур, 641 чăх çитĕнтерсе самăртаççĕ.

С. НАЛИМОВ.

ИШЛЕЙ. Шуркассинчи Папанин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли хăйсен хуçалăхĕсенче пĕрер выльăх çитĕнтерсе пама пулчĕç. Е. Серебрякова, Ф. Яргеева, Х. Цаплина колхозницăсем пĕрер сысна çури, колхоз бригадирĕ С. Тимков пĕр така самăртса параççĕ. Ытти колхозниксем те хăйсен хуçалăхĕсенче 19 чăх, 4 сысна тата ытти выльăхсем те çитĕнтерсе пама пулчĕç.

А. ИВАНОВ.

СОВЕТСКОЕ. Отечественнăй вăрçă фончĕсене героиллă çапăçакан Хĕрлĕ Çара валли [illegible] продуктсене туса парасшăн.

А. КОСОЙКИН.

йонри колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхозăн пуçарăвне ырласа чылайĕш колхозсем артель хуçалăхĕнче тата колхозниксем хăйсен килĕсенче Хĕрлĕ Çара памашкăн выльăх-чĕрлĕх ÿстерсе самăртма тытăнчĕç. Мăн Ямашри «Заря» колхоз членĕсем колхозăн пĕрлешÿллĕ фондĕнчен 10 сурăх, 25 чăх самăртма тытăнчĕç. Вĕсене колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли параççĕ. Çавăн пекех Калинин ячĕпе тăракан колхоз та Хĕрлĕ Çар валли пĕр ĕне, 5 така, 64 чăх-чĕп самăртать тата колхозниксем хăйсен килĕсенче 45 чăх, 3 така, 2 сурăх, 14 кăвакал, 12 хур çитĕнтереççĕ. «Чекист» колхоз Хĕрлĕ Çара пама—икĕ сысна, пĕр сурăх, колхозниксем—25 чăх самăртаççĕ.

Н. ЕФИМОВ.

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Цивильстрой» колхозăн пуçарăвне ырласа, районри ытти колхозсем те Хĕрлĕ Çар валли аш-какай, апат-çимĕç резервне тăвас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. «Красный луч» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли [illegible] В. Верлиюк, А. Храмов, М. Петров, И. Савинов, Г. Никифоров тата ытти колхозниксем хăйсен хуçалăхĕнче пĕрер сурăх çитĕнтерсе самăртса параççĕ. А. Тахташкин, И. Юркин юлташсем—пĕрер сысна самăртса параççĕ.

А. КОСОЙКИН.

Аш-какай обязательствине татнă

СОВЕТСКОЕ. Çак иртнĕ кунсенче район Чапаев ячĕпе тăракан тата «Сельхозартель» колхозсем государствăна 1942 çулхи аш-какай памалли обязательствине пĕтĕмпех татрĕç.

Я. СИГАЙ.

КУКЕС. Самукассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулта государствăна аш-какай памалли обязательствине мартăн 6-мĕш тĕлне пĕтĕмпех тултарчĕ. 1943 çулхине та 117 килограмм аш-какай пачĕ.

А. ПЕТРОВ.

Государствăна тырă сутаççĕ

ШАМАРША. Аслă çулпуç Сталин юлташ хамăрăн тăван çĕршыва фронт валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕрташар ытларах та ытларах парса тăма чĕнсе каланине район колхозникĕсем колхозниксем [illegible] государствăна сутма [illegible].

«Динамо» колхоз членĕсем Н. Рахманов, А. Кудряшов, Терентьев тата ытти юлташсем государствăна ытлашши тырă сутрĕç. Колхоз хăйĕн пĕрлешÿллĕ фондĕнчен государствăна 80 центнер сутрĕ.

«Пламя труда» колхоз членĕсем хăйсен пĕрлешÿллĕ нухăйĕнче, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, хăйсен тупăшĕнчен государствăна 5—10-шар пăт, колхозăн общественнăй фондĕнчен 100 центнер тырă сутма йышăнчĕç.

«Победа» ялхуçалăх артелĕн членĕсем те государствăна тырă сутаççĕ.

активлăн хутшăнаççĕ. Кукша кашни колхозник кооператива 3—5-шар пăт тырă сутать. Колхоз пайне кунна пĕрлешÿллĕ фондран 110 центнер тырă сутрĕ.

— Хамăрăн ытлашши тырра государствăна сутни хамăр оккупанчĕсене хирĕç кĕрешÿре çĕнтерÿ тăвма пулăшать,—теççĕ колхозниксем.

Ф. КРАСНОВ.

ЕЛЧĔК. Отечественнăй вăрçă фончĕсене Хĕрлĕ Çар çирĕп тăвас тĕлĕшĕн колхозниксем пĕтĕм вăйпа хавхаланатăр. Вĕсем татах та лайăхрах ĕçлесе государствăна [illegible] тăрăшаççĕ.

Районри «Сатурн» колхоз тата ытти колхозниксем хăйсен ытлашши тырра государствăна сутма пулчĕç. Ку таранччен «Сатурн» колхоз колхозникĕсем государствăна 1000 пăт тырă сутрĕç. М. Яковлев, И. Большаков, Г. Павлов, И. Никонов, П. Курчин колхозниксем государствăна 100—150-шар килограмм тĕштырă сутрĕç.

П. ДОКТОРОВ.

Ирĕке кăларнă районсенчи шкулсене пулăшатпăр

Хиделпуç тулликар [illegible] шкулĕн (Злăх р.) учительсемпе шкул ачисем ирĕке кăларнă районсенчи шкулсем валли 70 кĕнеке тата 134 тетрадь укçа пухса пачĕç.

М. КУСТИНОВ.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛĂН ВОЙСКИСЕМ. **Укерчĕк çинче:** Германири концентрациллĕ лагерьсенчен тарса Лондона çитнĕ француз салтакĕсем. Вĕсем ирĕклĕ Франци войскисен ретне тăрса фашистсене хирĕç çапăçмашкăн пĕрлешнĕ.

Румынипе Венгри хушшинчи хирĕçÿсем

Антонеску Трансильвание тавăрса пама ыйтать

Бухарестра пулнă Венгрие хирĕçле демонстраци

ЖЕНЕВА, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Румыни премьер-министрĕн заместителĕ тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Михаил Антонеску çак кунсенче Бухарестри университетра пулнă пухура Венгрие хирĕçле сăмах тухса каланă. Антонеску хăйĕн сăмахĕнче—венгерсем «Румыни çарĕнчен, Румыни çĕршывĕн чыслăхĕпе прависенчен» мăшкăллаççĕ, тесе кÿренсе пĕлтернĕ. Çавăн пекех вăл, Çурçĕр Трансильванире румынсене хĕсĕрлеççĕ тесе, Венгри влаçĕсене айăпланă. Румын салтакĕсемпе летчикĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен тарни çинчен Венгри хаçачĕсем нумай çырнă пирки Антонеску уйрăмăнах тарăхса калаçнă.

Антонеску хăратса çапла каланă: «Румыния хăйĕнчен мăшкăлланине текех тÿсме пултараймасть», румынсем «курайманлăха сыхласа усрама та» пĕлеççĕ, — тенĕ. Венгерсем Дунай тăрăхĕнчи бассейна хăйсен аллинче тытса тăрас правăсем пирки калаçнине Румыния текех тÿсме пултараймасть, — тенĕ малалла Антонеску. Антонеску сăмах каланă вăхăтра залра — «эпир Трансильвание тавăрса пама ыйтатпăр!» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕннĕ.

Вырăнти журналистсен ушкăнĕсем хушшинче çакăн пек шухăшлаççĕ: Антонеску çак сăмаха Гитлер хĕтĕртнипе тухса каланă пулĕ, теççĕ. Гитлер, çак майпа усă курса, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне çĕнĕ войскăсем ярас тĕлĕшпе Германия лартнă требованисене пурнăçа кĕртессине хирĕç тăма пăхакан Венгрин политикăллă ушкăнĕсене хăратма хăтланать.

АНКАРА, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Анкарари радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Бухарестра Венгрие хирĕçле тăвăллă демонстраци пулса иртнĕ. Премьер-министр заместителĕ Михаил Антонеску пуç пулса тăнипе Румынин министрĕсем хутшăннă çав демонстрацире тухса каланă ораторсем «кирек мĕнле пулсан та Трансильвание каялла тавăрса пама» ыйтнă, питех кирлĕ пулсан, «алла хĕç-пăшал тытмалла», тенĕ. Гитлер хăйĕн çакнашкал «союзникĕсене» ССР Союзне хирĕç «çуркуннехи кампание» хатĕрленме чĕннĕ самантра Румынипе Венгрия пĕр-пĕрне пыртан ярса тытма хатĕр тăнă пирки Анкарари радио-комментатор уйрăмăнах асăрхаттарса каланă.

ВИЛЕС ПАТНЕ ÇИТНĔ ФИНЛЯНДИЯ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Финляндирен килекен хыпарсем Финляндире вăйлă выçлăх пуçланни çинчен калаççĕ. Выçлăха пула питĕ нумай ачасем чирлесе вилеççĕ. Халăхсем ниме юрăхсăр вăрçа пĕтерме ытларах та ытларах ыйтаççĕ.

Çĕршывра чăннипе нимĕнле çăкăр запасĕ те çук. Катастрофăна сирсе ярас тесе, Финляндири влаçсем февраль уйăхĕнче хресченсен вăрлăх запасĕнчен 50 процентне тытса илмелли çинчен декрет кăларнă. Ку кăна та çителĕклĕ пулман, хресченсене хăйсене çиме хăварнă тырриссене те пĕтĕмпех шăлса илсе тухса кайнă.

Шведсен «Свенска моргенбладет» хаçачĕ Финляндири лару-тăру çинчен çапла çырать: «Çĕршыв вăрçăпа юхăнса пĕтсе çитнĕ, малашлăх çине ĕнтĕ вăл пăхма та хăрать. Хулара пурăнакан халăх ахаль продуктсене çеç мар, нормированнăй продуктсене те илеймест».

Финляндире пурăнакан халăх вилес патнех çитнине Финлянди руководителĕсен ирĕксĕрех йышăнма тивет. Финн сеймĕн депутачĕ Фрич, нумаях пулмасть Стокгольма пынăскер, çав «Свенска моргенбладет» хаçатрах çапла çырать: «Продовольстви лару-тăрăвĕ тÿсме çук япăх. Выçă ларас мар тесе, финсен вăрлăх фончĕсене çиме тивет».

Геббельс нимĕçсене лăпкă пулма чĕнет

АНКАРА, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Геббельс «Дас Рейх» хаçат урлă Германие çăлса хăвармашкăн нимĕçсене çĕнĕ жертвăсем тÿссе ирттерме чĕнсе каланă. Геббельсăн статьи тĕксĕм те салхуллă. Геббельс ĕнтĕ текех фронтри çĕнтерÿсем çинчен çуйăхмасть, вăл халĕ лару-тăру хăрушшине пур нимĕçсем те ăнлансах илеймен-ха тесе ÿпкелешет.

Çавăнпа пĕрлех Геббельс «Германи противникĕсен çынсем нумайрах пулнă пирки вĕсен лару-тăру лайăхраххишĕн» пăшăрханать. Нимĕçсем йывăрлăхсене тÿссе ирттерме пĕлмеççĕ тата вĕсем çав йывăрлăхсене тÿсесшĕн те мар тесе, пур çĕрте те тарăхса çитни палăрать тесе ÿпкелешет Геббельс. Халăх çавнашкал тарăхса çитни вăл вăрçă вăрăма тăсăлнинчен килнине Геббельс пытармасть, вăл нимĕçсене вăрçă пирки пачах та урăх тĕрлĕ шухăшлама тытăнма чĕнет. Германире активлă калаçусем вăйланнă пирки Геббельс шиклене ÿксе, «вăрçă çинчен сахалрах калаçмалла, ытларах ĕçлемелле, çынсен хăйсене картран тухмасăр лăпкăн тыткалама пĕлмелле» тесе çырать.

Эссен çине бомбăсем пăрахни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл çĕршывĕсемпе çыхăну тытса тăракан çынсем çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ эрнере англичансем Эссен çине бомбăсем пăрахнă пек вăйлă вăрçă пуçланнăранпа та пулман. Çавăн чухне Эссен çине Англирен 500 самолетран та ытла вĕçсе пынă пулĕ тесе шухăшлаççĕ нимĕçсем. Англи самолечĕсем питĕ пысăк бомбăсем пăрахнă, хăшпĕр бомбăсен йывăрăшĕ пĕр тоннăран та ытла пулнă.

Хулана кварталĕ-кварталĕпе арканса тăкнă.

Югослави патриочĕсем кĕрешĕве вăйлатаççĕ

СТАМБУЛ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Германипе Италин оккупациллĕ влаçĕсем Югославире пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ. Юлашки вăхăтра хресченсем хушшинче çĕр ĕçне ĕçлеме пăрахас движени анлăн сарăлса пырать, мĕншĕн тесен хресченсем тунă тырпула пурĕ-пĕрех Германие турттарса каяççĕ. Çав движени оккупантсене хăратса ÿкермеллех сарăлса кайнă. Çĕр ĕçне ĕçлессинчен пăрăнакан хресченсенчен çĕрсене туртса илни çинчен калакан пĕлтерÿсене хаçатсен страницисем çинче кашни кунах курма пулать. Фашистла влаçсем çавăн пек çынсене, вĕсен çĕрĕсене туртса илнисĕр пуçне, асаплантарса та вĕлереççĕ.

Оккупантсем ирĕксĕрленине хирĕç Югославири халăх партизанла кĕрешĕве вăйлатнипе ответлет. «Нова-Хорватска» хаçат Глина районĕнче (Загреб çывăхĕнче) хресченсем чугунçула çĕмĕрни çинчен тата нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерни çинчен пĕлтерет. Çав чугунçулпа çÿрессе темиçе кунлăха чарăнса ларнă. Ку районă янă усташсен отрячĕ партизансем пырса çапнипе поражени тÿснĕ, усташсен, вилнисемпе аманнисене нумай пăрахса хăварса, каялла чакма лекнĕ.

Фашистсем грек халăхне пĕтерсех пыраççĕ

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла пĕлтерет: Германия тытса илни 11 уйăх иртнĕренпе Грецире выçса тата чирлесе вилнĕ çынсен хисепĕ 150 пинрен пуçласа 200 пине çитет.

Гитлерла агентсен Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сăтăрла ĕçĕсем

АНКАРА, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Авторитетлă çынсем пĕлтернĕ тăрăх юлашки вăхăтра тĕпчесе тĕрĕсленĕ хыççăн çакна палăртнă: Германия 1938 çултанпах Сирие, Ирака тата Палестинăна хăй аллине çавăрса илме пĕтĕм вăйĕнчен тăрăшнă, çапла вара Турцин Çывăхри Хĕвелтухăçне тухмалли çулне пÿлсе лартса, ăна пĕтĕмпех Германие пăхăнса тăмалла тăвасшăн пулнă. Çакă вăл Ирак влаçĕсем Иракăн премьер-министрĕ пулнă Гайланин пăлхавĕ çинчен тĕпчесе тĕрĕсленинчен те уççăнах курăнать. Денц генералăн (Виши правительствин Сирири верховнăй комиссарĕ пулса ĕçленĕскерĕн) архивĕсене тата Сирире çав вырăнтах унтан маларах ĕçленĕ çынсем хăварнă архивĕсене пăхса тухнинчен те палăрать. Вăрçă пуçлас умĕн Сирире тата ытти Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче Германи консульствисем организациленĕ мусульманла-политикăллă клубсен ĕçĕсене тĕпчесе тĕрĕсленисем те çавăн çинченех калаççĕ.

Денц Сирире хăварнă Франци архивĕсенчен çакă курăнать: гитлерла агентсемпе шпионсем, уйрăмăнах Бальдур фон Ширах тата Шмидт, вăрçă пуçланас умĕн Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем тăрăх çав çĕршывсенче Германи пропагандине анлăн сарса ярас тĕлĕшпе кăна мар, пуринчен ытла, Сирипе Палестинăри хăшпĕр шейхсене вăрттăн хĕçпăшал тăратас ĕçе организацилес тĕлĕшпе çÿренĕ. Çав çĕршывсенче пăлхавсем туса, нимĕçсем Турцие пĕр-пĕччен тăратса хăварма ĕмĕтленнĕ, Çывăхри Хĕвелтухăçне демократиллĕ çĕршывсене хирĕç кĕрешмелли плацдарм туса хурасшăн пулнă.

Вăрçă пуçланас умĕн Бейрутра тата Дамаскра нимĕçсен. Разерпа Шапоруж консулĕсем пана укçа-тенкĕпе арабсен политикăллă клубĕсене организациленĕ. Францийĕн Сирири влаçĕсем 1939 çулхине çулла çав клубсене ухтарнă та, вара çакă палăрнă: çав клубсем арабсене, Разерпа Шапоруж пухнăскерсене, пĕрлештерсе тăнă. Çав арабсем урлă Германийĕн Сирири консульствисем Сирири, Палестинăри çынсене тата араб йăхĕсене винтовкăсем, ручной пулеметсем, патронсем тăратнă. Кайран, Германи агенчĕсем пулса тăракан арабсем пурăннă çуртсене ухтарнă хыççăн, çакна курнă: çав çуртсенчен Германи хĕçпăшалĕсене сыхласа усрамалли складсем туса хунă иккен. Сирипе Палестина хулисенче, çынсене хăратас шутпа, вырăнти руководительсем çине тапăннă тата тĕрлĕ взрывсем организациленĕ. Темиçе уйăх каярах Иерусалим мэрне, демократиллĕ çĕршывсем майлă тăнă çынна, револьвертан персе вĕлернĕ.

Çав вăхăтрах Германи агентури Турцире те сăтăрла ĕçсем тума хăтланса пăхнă. Çав ĕçе çÿлерех асăннă Шапоруж ертсе пынă. Сиририн хăваласа кăларнă хыççăн ăна Гитлер Германин Стамбулри вице-консулĕ вырăнне ĕçлеме уйăрса лартнă пулнă. 1940 çул пуçламăшĕнче Турци влаçĕсен 15 нимĕçе, гестапо агенчĕсене, арестлесе хупса лартма тивнĕ, вĕсем халиччене Турци тĕрмисенче лараççĕ-ха. 1939 çулăн вĕçĕнче Турци хаçачĕсем чылайĕшĕсен, вĕсен шутĕнчех «Тан» хаçат та, тăрăхса, фон Папен тата унăн агентури Совет Союзне хирĕç намăса пĕлмесĕр ирсĕр ĕçсем тунине тăрă шыв çине кăларакан статьясем пичетлерĕç.

Германи консульствисем Сирире, Иракра тата Палестинăра пухнă арабсен агентури ытти çĕршывсене те çитнĕ, çав шутрах Турцие те. Çав агентсем çавтери сĕмсĕрленсе кайнипе вĕсене 1942 çулăн пуçламăшĕнче нумайĕшне Турцирен кăларса янă. Германин Стамбулри вице-консулĕн Шапоружăн та Турцирен пăрахса кайма тивнĕ.

Тĕнĕл çĕршывĕсен Америкăри сăтăрла пропаганди

ВАШИНГТОН, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Правительствăн цифрăсемпе фактсен Бюровĕн директорĕ Маклиш çапла пĕлтернĕ: тĕнĕл çĕршывĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене хирĕç пропаганда сарса пыраççĕ. Вĕсем Америкăра политикăллă, расăллă тата социальнăй хирĕçÿсем чĕртсе ярса, Америка халăхне тăшманла тĕрлĕ ушкăнсене пайласшăн, вăрçа ăнăçлăн туса пыма питех те кирлĕ политикăллă пĕрлĕхе пăсасшăн.

Маклиш каланă тăрăх, тĕнĕл çĕршывĕсен радио тăрăх тухса калакан нумай йышлă ораторĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви çинчен тĕрлĕ элексем сараççĕ, вĕсем Англипе Америка халăхĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе ярасшăн, çавăнпа та вĕсем Англипе Америка халăхĕсем пĕр-пĕрине пусмăрласшăн çеç хыпса çунаççĕ тесе сÿпĕлтетеççĕ.

Маклиш çакна палăртать: тĕнĕл çĕршывĕсем форма енчен пăхсан нейтральнăй çĕршыв пулса тăракан Испанирен вăрттăн агентсене, Америкăри фашистсен 5-мĕш колоннин членĕсене, памалли пропагандистла материалсене пухса хатĕрлекен пункт туса хунă. Маклиш Америкăн разведка тăвакан органĕсен секретлă докладĕнчен ак çак вырăна илсе кăтартать: «Японин Мадридри атташи уйрăмăнах ак çак ыйтусем тăрăх информаци илме тăрăшать: 1) Рузвельт правительствине вăйсăрлатма е тата сирпĕтсех антарма май паракан политикăллă тата экономикăллă проблемăсем; 2) Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче хирĕçÿсем, пăлхавсем чĕртсе яма май паракан расăллă проблемăсем, 3) социальнăй проблемăсем тата инфляципе çыхăннă проблемăсем».

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: тĕнĕл çĕршывĕсен радиостанцийĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен стратегиллĕ вăйлă бази валли, Порто-Рико валли, паракан хăйсен пропагандине татах та ытларах вăйлатрĕç.

Тăшманла çĕршыв гражданĕсене Америкăн стратегиллĕ зонисенчен урăх çĕре куçарни

ВАШИНГТОН, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Рузвельт Америкăн стратегиллĕ зонисенчен урăх çĕре куçарма тивĕçлĕ тăшманла çĕршыв гражданĕсене вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм организаци тума приказ панă. «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Лос-Анжелосран японецсен малтанхи ушкăнне Калифорни штатне, шалалла куçармалла тунă, унта 10.000 çын валли уйрăм лагерь пулмалла.

Америкăн Совет Союзĕнчи посолне наградăлани

ВАШИНГТОН, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Рузвельт Америкăн Совет Союзĕнчи çĕнĕ посолне Стендли адмирала «службăра отлично ĕçленĕшĕн, çар флотĕнче хăйĕн питех те ответлă ĕçĕсене туса пынă чухне Америка правительствине çавтери пысăк пулăшу панăшăн» тиВĕç-çар медальне парса наградăланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КОММУНАЛЬНАЯ БАНЯ
в понедельник 23 марта с 3 часов утра до 7 часов утра следующего дня останавливается на ремонт.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:
ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянники, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто наборщик типографии, электромонтеры ящечники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.

6—1

КИНОТЕАТР
22 марта
КОНЦЕРТ
В антрактах и по окончании
ТАНЦЫ
Начало в 11 часов вечера.
Касса открыта с 2 часов дня.

ШКОЛА ФЗУ ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТОБУМАЖНОЙ ФАБРИКИ
с 15 марта по 15 апреля 1942 года производит ПРИЕМ УЧАЩИХСЯ.

В школу ФЗУ принимаются подростки в возрасте не моложе 16 лет, имеющие общеобразовательную подготовку не ниже 4 классов средней школы.

Срок подготовки по сокращенным программам—3 1/2 месяца.

Школа ФЗУ готовит:
1. Ватерщиц.
2. Банкаброшниц.
3. Ленточниц.
4. Ткачей.
5. Сновальщиц.
6. Мотальщиц.
7. Проборщиц.

Учащиеся школы ФЗУ обеспечиваются:
1. Стипендией на общих основаниях в размере от 94 руб. до 140 руб. в месяц,
2. Хлебными карточками,
3. Питанием через столовую и ларек фабрики.

Для поступления в школу ФЗУ необходимо подать заявление с приложением:
1. Справки о рождении или паспорта (паспорт предъявляется лично),
2. Справки об образовании,
3. Краткой автобиографии,
4. 4 фотокарточек.

За всеми справками по вопросам приема обращаться в канцелярию школы ФЗУ (ул. Карла Маркса, 20) ежедневно, кроме общевыходных дней, с 9 до 18 часов.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1028 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: л: